ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Февраль 17 ВЫРСАРНИКУН № 35 (8687) Хакĕ 20 пус. 34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Орденлă завод коллективне Хĕрлĕ ялав панă (1 стр.).
М. Яндимиркин. — Ăста механизаторсем хатĕрлер (1 стр.).
М. Котов. — Халăхсем мире хӳтĕлесе хăвараççĕ (2 стр.).
Ленин — Сталин ĕçĕшĕн хĕрӳллĕ кĕрешнĕ çын. Г. К. Орджоникидзе вилнĕренпе 15 çул çитнĕ май (2 стр.).
ВАРМАН ХАТЕРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРМАЛЛИ СТАХАНОВЛА УЙАХЛАХ. И. Смирнов. — Вăрман хатĕрлевне вăйлатмалла (3 стр.).
Шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатар. Халăха вĕрентес ĕç ыйтăвĕпе пухăннă республикăри канашлуран (3 стр.).
В. Морев. — Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Китай халăхĕ Китайпа Совет Союзĕ договор тунăранпа икĕ çул тултарнине палăртать (4 стр.).
Тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне пухакан Пĕтĕм тĕнчери Пуçару Комитечĕн хатĕрленӳ ĕçĕсене тăвакан комиссийĕ пĕлтерни (4 стр.).

Кашни колхозра радио пултăр

Совет çыннин пурнăçĕнче радио питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Радио чи малта пыракан идейăсене — марксизм-ленинизм идейисене пропагандăлать, хамăр çĕршыври ĕçсем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен пĕлтерсе тăрать, совет культурипе наукин çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе, совет литературипе искусствин чи лайăх произведенийĕсемпе, производство ĕçĕнче малта пыракансен опычĕсемпе паллаштарать. Радио совет çыннисене пĕлӳ парать.

Пирĕн çĕршывра радиофикаци ĕçĕ çултан-çул вăйланса пырать. Халĕ ĕнтĕ радиопа хулари çынсем кăна мар, ялсенче те анлăн усă кураççĕ. Радио та, кĕнеке-хаçатпа кино пекех, совет çыннин йăлине кĕчĕ. В. И. Ленин хăй вăхăтĕнче: Мускавра каланă сăмахсене, лекцисемпе докладсене, хаçат-журнал вуласа панине пĕтĕм Россия илтĕ, тесе ĕмĕтленнĕ. Çак ĕмĕт пирĕн çĕршывра тахçанах пурнăçа кĕчĕ.

Радиофикаци ĕçне анлăн сарса пыма социализмлă промышленность тĕрлĕ йышши радиоприемниксемпе радиоаппаратура нумай туса кăларать. Колхозсем организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕпленсе пыни, ялхуçалăхне электрификациленни колхозсене хăвăртрах радиофикацилеме май парать.

Радиофикаци ĕçĕ политикăллă пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Радио колхозлă ялсен умĕнче тăракан хуçалăхлă-политикăллă залачăсене хăвăртрах, ăнăçлăрах пурнăçлама, çĕрĕç культурине ӳстерсе пыма, ял çыннисен культурăлăхне хăпартма, ялпа хула хушшинчи уйрăмлăха пĕтерме пулăшать. «Радио хăйĕн [illegible], хăйĕн массăлăхĕпе пропагандăпа агитацин питĕ çивĕч хĕçпăшалĕ пулса тăрать», тенĕ М. И. Калинин.

Пирĕн çĕршывра талккăшпех радиофикациленĕ облаçсем те сахал мар. Вĕсен хисепĕ нумайланса пырать. Радиофикаци пĕтĕм совет общественноçĕн пархатарлă ĕçĕ пулса тăчĕ. Ку ĕç юлашки çулсенче пирĕн республикăра та чылай вăйланчĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăнхи çулсенче кăна республикăра радиоузелсен хисепĕ икĕ хут ытла ӳснĕ, радиоузелсене нумайăшне çĕнĕ аппаратурăпа пуянлатнă Кашни район центрĕнче, кашни хулапа рабочи поселокра радиоузел пур. 137 колхоза пĕтĕмпех радиофикациленĕ. 27 колхозра радиоузелсем ĕçлеççĕ. Радио кăртес ĕç уйрăмах Комсомольски, Красноармейски, Сĕнтĕр тата Шăмăршă районĕсенче ăнăçлă пулса пырать.

Чылай районсемпе ялсенче радио сарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ пулсан та, ку ĕç пирĕн республикăра питĕ кая юлса пырать. Нумай колхозсенче радио çук. Лампăллă тата детекторлă приемниксем питĕ сахал. Нуррисем те чылай çĕрте ĕçлемеççĕ. Радиоприемниксен пайĕсене, радиолампăсемпе батарейисене сутас ĕçе, радиоприемниксене юсас ĕçе вырăнсенче кирлĕ пек йĕркелемен.

Иртнĕ çулсенче пирĕн республикăра радио сармалли плана ăнăçлăн пурнăçлайман. Ку ĕç уйрăмах Калинино, Чурачăк. Тăвай тата Шăхасан районĕсенче начар пырать. Элĕк, Ишлей, Калинино тата Тăвай районĕсенче радиоточкăсен хисепĕ хутшăнас вырăнне чакнă.

План тăрăх иртнĕ çул 37 радиоузел тумалла пулнă пулсан, пурĕ те 20 радиоузел кăна тунă. 169 колхоза радиофикацилемелле пулнă, 21 колхоза кăна радиофикациленĕ.

Ялсене радиофикацилесси кирлĕ пек сарăлманни чылай районсенчи партипе совет организацийĕсем ку ĕçе тивĕçлипе хакламаннинчен килет. Хăшпĕр çĕрте парти райкомĕсемпе райисполкомсем çак ĕçрен пăрăнса тăраççĕ, вăл ĕçе пĕтĕмпех çыхăну органĕсемпе суту-илӳ организацийĕсене шанса панă.

Ялсене радиофикацилес ĕçе пирĕн пур майсемпе те вăйлатса пырас пулать. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, çитес ик-виçĕ çул хушшинче республикăна пĕтĕмпех радиофикацилесе çитермелле. Пирĕн республикăра 1955 çул тĕлне 70 пин ытла радиоточка пулмалла. Çак залачăна ăнăçлăн пурнăçлас тесен, çитес виçĕ çул хушшинче çĕнĕрен 125 радиоузел тумалла, 36 радиоузела çĕнетсе вăйлатмалла. Республикăна пĕтĕмпе радиофикацилесе çитерме государство 12 миллион тенкĕ ытла укçа уйăрса панă. Радиофикаци енĕпе кăçал пирĕн нихçанхинчен нумайтарах ĕçлемелле. Çĕнĕрен темиçе пин радиоточка хутшăнмалла. Çĕршер километр тăршшĕ радиолини кармалла. Колхозсен вăйĕпе кăна кăçал 44 радиоузел тумалла. Çак ĕçсене тума пирĕн мĕн кирли пурте çителĕклĕ.

Колхозсене радиофикацилес ĕçе парти райкомĕсен куллен ертсе пымалла. Яла радио кĕртесси çинчен партипе комсомол организацисен, колхозниксен пухăвĕсенче [illegible], радио ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва анлăрах сармалла Радиофикаци планне пурнăçлас ĕçе радиоузелсене тăвакан ведомствăллă организацисене çеç мар, пĕтĕм совет общественноçне, колхозниксен йышлă массине хутшăнтармалла. Комсомол организацийĕсем ялсенче радио сарас ĕçе пуçарса пыракансем пулса тăмалла, вĕсем детекторлă радиоприемниксене сарас тĕлĕшпе активлăн ĕçлеме тивĕç.

Радио сарас ĕç—çыхăну работникĕсен ответлă залачи. Çыхăну работникĕсен ку тĕлĕшпе партипе совет, комсомол тата Досааф организацийĕсемпе куллен тачă çыхăнса ĕçлемелле, ĕççыннисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне тимлĕ туса пымалла Радио совет çыннин пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен кашни колхозникпа колхозница пĕлсе тăтăр. Çыхăну органĕсен колхозсене радиофикацилес тĕлĕшпе тумалли договорсене вăхăтра тата пĕтĕмĕшпех пурнăçласа пымалла.

Кашни колхозра, кашни колхозник килĕнче радио пултăр! Çакăншăн кĕрешмелле партипе совет тата комсомол организацийĕсен. Çакна ялан асра тытни кирлĕ: радио вăл пропагандăпа агитаци ĕçне хăватлă сармалли, ĕççыннисене коммунизмла воспитани памалли пысăк вăй пулса тăрать. Колхозсене радиофикацилес тĕлĕшпе лартнă пысăк залачăсене партипе совет организацийĕсем ăнăçлăн пурнăçласа пыма тивĕç.

Орденлă завод коллективне Хĕрлĕ ялав панă

Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ, 1951 çулхи тăваттăмĕш кварталти социализмлă ăмăртура мала тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава февралĕн 14-мĕшĕнче завод коллективне пачĕç. Çавна май, иккĕмĕш сборочнăй цехра заводри рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен тата служащисен митингĕ пулчĕ. Чăвашоблпрофсовет президиумĕн председателĕ Ф П. Романов юлташ, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне парса, завод коллективне награда илнĕ ятпа саламларĕ. производствăра тата пысăкрах çитĕнӳсем тума ырă сунчĕ.

Завод директорĕн ĕçĕсене тăваканĕ, главнăй инженер А. В Буйволов юлташ, Хĕрлĕ Ялава илсе, çапла каларĕ:

— Пирĕн коллектив иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталта пысăк çĕкленӳпе ĕçлесе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Эпир Электропромышленность министерствин предприятийĕсем хушшинче пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăнтăмăр, СССР Министерствисемпе ведомствисен Чăваш республикинчи предприятийĕсем хушшинче пынă ăмăртура мала тухрăмăр. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕ пире малашне татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать çеç мар, вăл тата ĕçре нихçанхинчен те хастарлăрах пулма хушать. Пирĕн кăçал производство планĕсене вăхăтра тултарса пынипе пĕрлех, правительствăн ответлă заказĕсене чыслă пурнăçламалла.

Митингра çавăн пекех иккĕмĕш сборочнăй цехри Зарубина калибровщица, штамповочнăй цех мастерĕ Купчик, виççĕмĕш сборочнăй цехри Яковлев слесарь сăмах тухса каларĕç. Вĕсем Хĕрлĕ ялава малашне те заводра хăварассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеме пĕтĕм завод коллективĕ ячĕпе сăмах пачĕç.

И. В. Сталинăн „Октябрьти революцин пĕтĕм тĕнчери характерĕ“ ятлă кĕнекине чăвашла кăларнă

Чăваш АССР государство издательстви И. В. Сталин юлташăн «Октябрьти революцин пĕтĕм тĕнчери характерĕ» ятлă произведенипе чăвашла куçарса кăларчĕ.

Ку произведение И. В. Сталин 1927 çулта, Октябрьти Социализмлă Аслă революци вунă çул тултарнă тĕле, çырнă.

«Октябрьти революцин пĕтĕм тĕнчери характерĕ» кĕнеке тиражĕ 5.000 экземпляр.

Совет Союзĕ тăрăх

СССР Верховнăй Совет сессийĕ ячĕпе

МУСКАВ. Мускаври промышленность предприятийĕсен коллективĕсем СССР Верховнăй Совет сессийĕ уçăлнă куна производствăри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Столицăри Сталин ячĕпе тăракан автозаводри 30 стахановец, сесси ячĕпе вахтăна тăрса, çак кунсенче производствăра пысăк çитĕнӳсем тунă. Заводри паллă стахановец Михаил Ушкалов пĕр сменăра автомобиль тĕнĕлĕ тумалли тимĕр нормăран ирттерсе 180 штук хатĕрленĕ. Ку ĕçре çакăн пек пысăк тухăçлăхпа халиччен заводра пĕр рабочи те ĕçлемен.

Л. М. Каганович ячĕпе тăракан шăрпăмĕш подшипник заводĕнче СССР Верховнăй Совет сессийĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва чи лайăх продукци туса кăларакан бригадăсен руководителĕсем—Муравьев слесарь, Лебедев, Пименов тата Бушуев токарьсем пуçласа янă. Вĕсен бригадисем сменăри задание 230 процент тултараççĕ.

Мускаври С. М. Киров ячĕпе тăракан «Динамо» заводра та СССР Верховнăй Совет сессийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва анлă сарăлнă Бунта обмоткăна изоляци пехĕнче ĕçлекен коммунистсем Нестерова, Николаенков, Евтеева тата ыттисем те чи малтан стахановла вахтăна тăнă. Вĕсем ĕç нормине чылай ирттерсе тултарса пыраççĕ.

Заводăн ытти цехĕсенче ĕçлекенсем те стахановла вахтăна тăнă кунсенче ĕç тухăçлăхне чылай ӳстернĕ.

* * *

СВЕРДЛОВСК. Верх-Исетск заводĕнчи сталеварсем СССР Верховнăй Совечĕн пулас сессийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăнă.

Иван Мансуров ертсе пыракан электрометаллурги бригади февраль уйăхĕ пуçланнăранпа 13 кун хушшинче заданирен ирттерсе 100 тонна металл шăратса кăларнă.

Лупейко, Некишелов тата ытти сталеварсем те задание ирттерсе тултарнă. Мартен цехĕнче ĕçлекенсем планран ирттерсе çĕршер тонна курçă шăраса панă.

* * *

ПЕТРОЗАВОДСК. Сунски тулă щитаракан кантур коллективĕ çак кунсенче стахановла ĕçлет Хĕллехи вăхăтра сулăсем тумалли графика чылай ирттерсе тултарнă. Графикран ирттерсе 17 пин кубометр чухлĕ йывăçа сулăсем туса хунă. Гидротехника сооруженийĕсене сулăсем тата механиксем юсамалли графика та ирттерсе тултарнă.

Петрозаводскри çуррсем тăвакан комбинат, Вирандозерски вăрманпромхозĕ тата ытти предприятисен коллективĕсем те СССР Верховнăй Совет сессийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăннă.

Февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС).

Костромари ялхуçалăх институтĕнче вĕренекен студентсем «Караваево» совхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен паллă çынсемпе—Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне икĕ хут илме тивĕçлĕ пулнă юлташсемпе тĕл пулнă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: сулахайран сылтăмалла — Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне икĕ хут илме тивĕçлĕ пулнă Е. И. Грехова, У. С. Баркова, А. В. Нилова тата Л. П. Иванова студентсемпе калаçаççĕ.

М. АЛЬПЕРТ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Дон тăрăхĕнчи тĕп канала тунă çĕрте

БОЛЬШАЯ МАРТЫНОВКА (Ростов облаçĕ). Дон тăрăхĕнчи тĕп канала тăвас ĕç ăнăçлă пырать. Канал пулмалли 26 километр тăршшĕ вырăна шыв тултарма хатĕрлесе çитернĕ. Хальхи вăхăтра Анатри Дон тăрăхĕнче шыв валеçсе тăмалли канал тăваççĕ, вăл тĕп каналтан пуçланса 73 километр тăршшĕ пулать. Сурkунтас кайр пыленчи шыв валеçсе тăмалли канала ĕçе кĕртеççĕ, вăл 90 километр тăршшĕ пулать. Кăçал Ростов облаçĕнчи колхозсен çĕрĕсене 100 пин гектар чухлĕ шăвармалла тăваççĕ.

Дон тăрăхĕнчи тĕп канал 37-мĕш километрта туннельпе пĕрлешет. Унта шыв 6 километр тăршшĕ çĕр айĕпе пырать, вара каллех çĕр çинчи канал тăрăх юхма тытăнать. Халĕ туннель патне çитсе пыракан вырăнта пысăк экскаватор ĕçлет, унăн курки кашни ăсмассерен 14 кубометр çĕр чавса кăларать. Туннель патне çитсе пынă тĕлте тарăн та анлă шăтăк чаваççĕ, унта шыв нумай пухăнса тăмалла пулать.

Дон тăрăхĕнчи тĕп канала тăвакан стахановецсем хальхи вăхăтра туннелĕн кăнтăр енчи участокĕнче ĕçлеме тытăнаççĕ. Ку тĕлте канал Сал юханшывĕ урлă каçать, вара кăнтăр еннелле каять.

(ТАСС).

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕ 34 çул тултарас умĕн

Пирĕн Тăван çĕршыв столицинчи — Мускаври ĕççыннисемпе Мускав гарнизонĕнчи воинсем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине паллă тума хатĕрленеççĕ. Çар чаçĕсенче, çар шкулĕсенче, фабрикăсемпе заводсенче тата учрежденисенче Совет государствин Тĕпчăшаллă Вăйĕсене туса, хунă В. И. Ленинпа И. В. Сталин çинчен, совет халăхĕ граждан вăрçи çулĕсенче тата Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче тунă аслă çĕнтерӳсем çинчен докладсемпе лекцисем тата каласусем ирттереççĕ.

Чаплă уяв кунĕ тĕлне клубсенче, культура дворецĕсенче, офицерсен çуртĕсенче тата библиотекăсенче выставкăсем нумай тăваççĕ. Февралĕн 15-мĕшĕнче Совет Çарĕн М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан Тĕп çуртĕнче кĕнекесен пысăк выставки уçăлнă.

Совет Çарĕпе Тинĕс-çар Флочĕ 34 çул тултарнă кун Сокольникри культурăпа кану паркĕнче тĕл перекенсен, автомобильпе çӳрекенсен, лашапа çӳрекенсен тата йĕлтĕр спорчĕ енĕпе массăллă ăмăртусем пулаççĕ. (ТАСС).

Уй-хир ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ

НАЛЬЧИК. Енер Прохладнăй районĕнчи Петровски ячĕпе тата Жук ячĕпе тăракан колхозсем Кабардин АССР-ĕнче чи малтан уй-хир ĕçĕсене тума тытăннă. Екатериноградски МТС-ĕн çав колхозсенче ĕçлекен трактор бригадисем сухалаççĕ тата кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене сӳрелеççĕ. Çав вăхăтрах районта кĕрхи тулă калчине апат çама тытăннă.

СИМФЕРОПОЛЬ. Çантлăк лайăх тăрать. Облаçри нумай колхозсем çуркунехи уй-хир ĕçĕсене тума тытăннă. Механизаторсем кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене сӳрелеççĕ, суха тăваççĕ тата кĕрхи тырă калчисене апат параççĕ.

ФРУНЗЕ. Чуй айлăмĕнчи колхозсем иртнĕ çулхинчен пĕр уйăх малтан уй-хирсене шăварма тытăннă. Шăнман юханшывсене усă курса, уй-хирсене плана пăхнинчен 15—20 пин гектар ытларах шăварса хăвараççĕ.

Февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС).

В. Гюго писателе хисеплесе

Февралĕн 15-мĕшĕнче, А. А. Фадеев председатель пулса ертсе пынипе, французсен аслă писателĕ Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнă куна уявласа ирттерме уйăрнă Пĕтĕм Союзри комитет ларăвĕ пулнă.

Комитет çак паллă куна ССР Союзĕнче уявласа ирттерме хатĕрленмелли тата уявламалли ĕçсен планĕ çинчен сӳтсе явса, çав плана çирĕплетнĕ. Француз халăхĕн аслă ывăлне Виктор Гюго писателе мĕнпур çĕршывсенчи миллионшар çынсем хĕрӳллĕ юратаççĕ. Вăл çуралнă куна Совет Союзĕнче анлăн паллă туса ирттереççĕ. Февралĕн 26-мĕшĕнче, В. Гюго çуралнăранпа 150 çул çитнĕ кун, Союзсен çуртĕн Колоннăллă залĕнче совет общественность представителĕсемпе пĕрле савăнăçлă лару пулать. Мускаври И. В. Сталин ячĕпе тăракан автозаводăн Культура дворецĕнче, çĕршыври пысăк центрсенче—Ленинградра, Киевра, Тбилисире, Минскра, Ригăра, Вильнюсра тата ытти хуласенче те юбилей ячĕпе вечерсем ирттереççĕ. Шкулсенче, рабочисен клубĕсемпе ялти клубсенче, пысăк библиотекăсенче писатель пурнăçĕпе творчестви çинчен каласусем ирттереççĕ.

Юбилей кунĕсенче çĕршыври нумай театрсенче — Мускавра, Ленинградра, Киевра, Харьковра, Минскра, Таллинра Свердловскра, Саратовра тата ытти хуласенче те Гюго произведенийĕсем тăрăх çырнă пьесăсене лартса параççĕ.

Илемлĕ литература кăларакан государство издательствин директорĕ А. К. Котов В. Гюго сочиненийĕсен 16 томлă çĕнĕ изданине кăлармалли планпа паллаштарнă. Писателĕн суйласа илнĕ произведенийĕсене икĕ том туса пысăк тиражпа пичетлесе кăлараççĕ. Çавăн пекех тата писатель пурнăçĕпе творчестви çинчен çырнă кĕнеке пичетленсе тухать.

Государствăн литература музейĕ Союзсен çуртĕн Колоннăллă залĕнче тата И. В. Сталин ячĕпе тăракан культура дворецĕнче В. Гюго ячĕпе пĕр кунлă выставкăсем организацилет. (ТАСС).

„Советлă Бурят-Монголи“

СССР Кинематографи министерствинче февралĕн 15-мĕшĕнче «Советлă Бурят-Монголи» ятлă çĕнĕ кинофильма пăхса тухнă.

Кинокартина бурят-монгол халăхĕн пурнăçĕнче пулнă пысăк улшăнусем, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче тата культура строительствинче тунă пысăк çитĕнӳсем çинчен каласа парать.

«Советлă Бурят-Монголи» ятлă кинокартинăна çак кунсенче столицăри кинотеатрсенче кăтартма пуçлаççĕ. (ТАСС).

Ăста механизаторсем хатĕрлер

Большевиксен партийĕ, Совет правительстви социализмлă ялхуçалăхне çĕнĕ те хăватлă техникăпа хĕçпăшаллантарчĕç. 1951 çулта пирĕн республикăри МТС-сене тракторсем, самоходнăй комбайнсем тата ытти машинăсем нумай илсе килчĕ. Кăçал вĕсене МТС-сем тата та ытларах илеççĕ.

Ялхуçалăхне техникăпа пуянлатни йывăр ĕçсене анлă механизацилеме, хăвăрт тата лайăх пахалăхпа пурнăçлама, тырпул тухăçлăхне хăпартма май парать.

МТС механизаторĕсем çĕрĕç культурине ӳстерессишĕн, партипе правительство колхозсем умне лартнă тĕп залачăна—тырпул тухăçлăхне тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне малалла ӳстермелли залачăна пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерме кашни колхозрах резервсем нумай Колхоз тата МТС руководителĕсен пирвайхи залачи вăл—çав резервсене палăртса, вĕсемпе кирлĕ пек усă курассине организацилесси пулать.

Ялхуçалăхне малалла вăйлатас ĕçре МТС-сем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Малта пыракан механизаторсем хăйсене çирĕплетсе панă тракторсемпе, комбайнсемпе сезонри тата сменăри нормăсене ирттерсе тултараççĕ, колхозсене ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса ирттерме пулăшаççĕ. Етĕрне МТС-ĕнчи В. Лаптев юлташ иртнĕ çулта колхозсене 467 гектар çĕр лаптăкĕ çинчи тырпула самоходнăй комбайнпа вырса, çапса панă. Вăл хăйĕн комбайнĕпе кашни кун 250—300 центнер çапнă.

Машинăсене лайăх пĕлекен ăста механизаторсем кăна хăйсен ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тума пултараççĕ. Çавăнпа та пысăк квалификациллĕ механизаторсем вĕрентсе хатĕрлесси МТС-сен колхозсен тата вырăнти ялхуçалăх органĕсен руководителĕсемшĕн ответлă залача пулса тăрать. Анчах та хăшпĕр колхоз председателĕсем тата МТС директорĕсем машинăсемпе ĕçлекен кадрсене вĕрентсе хатĕрлессине кирлĕ пек хакламаççĕ.

Иртнĕ çулта Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ кирлĕ чухлĕ трактористсем вĕрентсе хатĕрлемен. Хăшпĕр тракторсемпе пĕрер смена анчах ĕçленĕ. Çавăнпа та плана 89 процент кăна тултарнă. МТС начар ĕçленипе районти колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем вăрăма тăсăлса пынă. Кăçал та МТС директорĕ тата колхоз руководителĕсем механизаторсене вĕрентсе хатĕрлеме çителĕклĕ тăрăшмаççĕ. План тăрăх МТС сумĕнче 25 тракторист вĕрентмелле пулсан, паянхи куна курсра 20 çын кăна вĕренет.

Хăшпĕр колхоз руководителĕсем хăйсен колхоз членĕсене механизаторсем пулма вĕрентме тăрăшмаççĕ. Октябрьски районĕнчи «Дружба» колхозра иртнĕ çул 5 трактор, пĕр комбайн ĕçленĕ, Çав вăхăтрах асăннă колхоз членĕсенчен пурĕ те икĕ çын кăна тракторист пулса ĕçлет. Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр районсенчи нумай колхоз руководителĕсем хăйсен колхозĕнче ĕçлеме механизаторсем хатĕрлесси çине кирлĕ пек пăхмаççĕ.

Республикăри механизаци шкулĕсем вĕренекенсене плана пăхнă чухлĕ пухса çитермен. Дизель тракторсемпе ĕçлеме паянхи куна планпа пăхнинчен 67 çын сахалтарах вĕренет. Уйрăмах Шăмăршă, Çĕмĕрле, Сиява, Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕсем курссене вĕренме ямалли плана нумай тултарман.

Курссен ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Чылай çĕрте вĕренӳ ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр МТС-сенче курсантсене трактор ĕçне çителĕклĕ вĕрентмеççĕ.

Сĕнтĕр, Ишлей, Шупашкар, Çĕрпӳ, Октябрьски тата ытти хăшпĕр районсенчи МТС-семпе колхоз руководителĕсем уйрăмах комбайнерсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе хакламаççĕ. Вĕренмен çынсене комбайнсемпе ĕçлеттереççĕ, çавăнпа та МТС-сем комбайнсемпе тырă вырса пухмалли плана тултараймаççĕ. Иртнĕ 1951 çулта Октябрьски МТС-ĕ кашни комбайн пуçне вăтам шутпа кунне 4,4 гектар, Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ — 5,3 гектар, Ишлей МТС-ĕ—5,7 гектар чухлĕ кăна тырпул пухса кĕртнĕ.

Вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан кĕрешӳре прицепщиксем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Прицепщик—трактористăн пĕрремĕш помощникĕ. Унăн нумай пĕлес пулать. Вĕренмен çын машинăсене кирлĕ пек пăхса тăма пултараймасть. Анчах хăшпĕр колхоз председателĕсем, МТС директорĕсем ялан прицепщиксем хатĕрлессине пачах та хакламаççĕ. Цăрачкав, Куваçино, Етĕрне МТС-ĕсенчи нумай трактористсем час-часах прицепщиксемсĕр ĕçлеççĕ. Паллах ĕнтĕ, прицепщиксĕр ĕçленĕ чухне ĕç пахалăхĕ начар пулать. Кашни трактористпа пĕрле ĕçлеме яланлăхах прицепщиксем вĕрентсе хатĕрлемелле.

Совет правительстви механизаторсене ĕçлеме лайăх условисем туса парать. Машинăсемпе тухăçлă ĕçлеме хавхалантарас шутпа, ĕçленĕшĕн тӳлемелли йĕркене улăштарнă. Машинăсене пăхса усрас тĕлĕшпе механизаторсен ответлăхне хăпартнă. Кунпа пĕрлех трактористсене МТС укçан тӳлекен гарантиллĕ минимума хăпартнă. Прицепщиксене колхозран гарантиллĕ минимумпа тĕштырă тата укçа тенкĕ тӳлемелле тунă. Çакă вăл механизаторсене ĕç тухăçлăхне, çĕрĕç культурине ӳстерессишĕн лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

Республикăра малта пыракан механизаторсем вăйлă тырпул туса илессишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла лайăхлатассишĕн, сезонти тата сменăри нормăсене пĕтĕмĕшпех тата ирттерсе тултарассишĕн МТС-сенче социализмлă ăмăртăва анлă сарма чĕнсе каларĕç. Вĕсем конкретлă обязательствăсем илчĕç. Республикăри малта пыракан механизаторсен патриотла пуçарăвне сарса пырасси—МТС руководителĕсен тивĕçĕ. 1952 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса пыма, илнĕ обязательствăсене чыслă пурнăçлама кашни МТС-ăн пысăк квалификациллĕ кадрсем хатĕрлемелле.

М. ЯНДИМИРКИН,
Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин агрономĕ.

Халăхсем мире хӳтĕлесе хăвараççĕ!

М. КОТОВ,
Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн ответлă секретарĕ

Çулталăк каярах, 1951 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче, И. В Сталин юлташ «Правда» корреспонденчĕпе калаçни пичетленсе тухрĕ. Сталин юлташăн аслă сăмахĕсем тĕнчене ялкăшса тăракан хĕвел çути пек çутатрĕç. Мĕнпур континентсемпе материксенче пурăнакан миллионшар ырă кăмăллă çынсем кучухнехи чи хумхантаракан ыйтусем çине Сталин юлташ калаçăвĕнче ответ тупрĕç.

Çак историллĕ документ пĕтĕм тĕнчери халăхсен миршĕн вĕрешмелли программи пулса тăрать Сталин юлташ вăрçă пурпĕрех пулмалла япала маррине, халăхсем мире сыхласа хăварас ĕçе хăйсен аллине илсен, тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе яма пултарнине кăтартса пачĕ.

Çак калаçура совет халăхĕ мĕнпур халăхсем хушшинчи миршĕн яланах çирĕп кĕрешсе пынине тарăн çутатса панă. Сталин юлташ Америкăпа Англин агрессиллĕ блокĕнчи вăрçă чĕртекенсен ирсĕр планĕсене тăрă шыв çине кăларчĕ, тĕнчери çĕнĕ вăрçă организаторĕсен чăн-чăн сăн-сăпатне кăтартса пачĕ.

Çĕнĕ вăрçă пуçлама хапсăнакансем вĕсем агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика блокне ертсе пыракан вăйсем—Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи, Англири, Францири агрессиллĕ вăйсем пулса тăраççĕ. «Вăрçă вĕсене пысăкран та пысăк услам илме, урăх çĕршывсене çаратма кирлĕ. Вĕсем—миллиардерсемпе миллионерсем, вăрçа питĕ пысăк услам паракан тупăш статьи вырăнне хуракансем.

Вĕсем, çав агрессиллĕ вăйсем, реакциллĕ правительствăсене хăйсен аллинче тытса тăраççĕ тата вĕсене хăйсене кирлĕ пек ĕçлеттереççĕ. Анчах çакăнпа пĕрлех вĕсем çĕнĕ вăрçă ан пултăр текен тата мире хӳтĕлесе хăварассишĕн тăракан хăйсен халăхĕсенчен хăраççĕ. Çавăнпа та вĕсем, реакциллĕ правительствăсемпе усă курса, хăйсен халăхĕсене суйса пăтраштараççĕ, вĕсене улталаççĕ, çĕнĕ вăрçа—хӳтĕленмелли вăрçă пек, мире юратакан çĕршывсен мирлĕ политикине вара—агрессиллĕ политика пек кăтартма тăрăшаççĕ. Вĕсем, хăйсен агрессиллĕ планĕсене хăйсен халăхĕсене йышăнтарас, вĕсене çĕнĕ вăрçа хутшăнтарас тесе, хăйсен халăхĕсене улталама тăрăшаççĕ».

Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем çинчен ултав тата элек сарнипе, Англипе Америкăри вăрçă чĕртекенсем хăйсем çав тери нумай хĕçпăшал туса кăларнине, васкасах агрессиллĕ çĕнĕ блоксем тунине пытарма тăрăшаççĕ.

Сталин юлташ «Правда» корреспонденчĕпе калаçнă чухне çĕнĕ вăрçă организаторĕсенчен пĕрне, Англи премьер-министрĕ пулнă лейбористсен пуçлăхне—Эттлие вамăс юпи çумне пăталарĕ. Империализмăн çак тискер тарçи уйăхмах Совет Союзĕ çинчен каçăхса кайса элек сарнă. Çав элек Эттлие мĕншĕн кирлĕ пулнине Сталин юлташ «Правда» корреспонденчĕпе калаçнă чухне уççăн кăтартса пачĕ.

Совет Союзĕ вăрçă хыççăн хăйĕн çарĕсене демобилизациленĕ çинчен, çĕршывăн пĕтĕм вăйне мирлĕ строительство ĕçне пăхăнтарни çинчен пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Совет государстви граждански промышленноçа çав тери вăйлатса ячĕ, Атăлпа Днепр, Донпа Аму-Дарья çинче коммунизмăн аслă стройкисене туса пуçларĕ, çутçанталăка урăхлатса çĕнетмелли питех те аслă плана пурнăçа кĕртме тытăнчĕ. Çав ĕçсем валли бюджетран вуншар миллиард тенкĕ укçа расходлаççĕ. Совет правительстви куллен кирлĕ таварсен хакне пĕрмаях йӳнетсе пырать, халăх хуçалăхне, культура строительствине укçа-тенкĕ нумай хывать,—çавсене туса та бюджетран вуншар миллиард тенкĕ укçа каять.

Паллах ĕнтĕ, Совет Союзĕ ку ĕçсене тунă вăхăтрах çар промышленноçне вичçĕсĕр вăйлатма тата хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене вичçĕсĕр ӳстерме пултараймасть.

США-па Англи тĕслĕхĕ çакна уççăнах кăтартса парать: хĕçпăшаллă вăйсене ӳстерни тата хĕçпăшал нумай туса кăларни çар промышленноçне вăйлатса ярать, граждански строительствăна чарса лартать. Империалистсем вăрçа хатĕрленни ĕçсыннисен пурнăçне çав тери йывăрлатать. США-ра, Англире тата ытти çĕршывсенче налогсем ӳсеççĕ, куллен кирлĕ таварсем хакланса пыраççĕ.

Çав никам. нимĕнпе пытараймин фактсене тата наука вĕрентнине пăхмасăр, Эттли Совет Союзĕ çинчен уççăнах элек сарчĕ. Çав элеке вăл Атлантика блокĕнчи çĕршывсенче хĕçпăшал питех те нумай туса кăларнине тӳрре кăларас шутпа, Англи халăхне улталас, ăна Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен пуç пулса тăракан ушкăнĕсем организацилекен тĕнчери çĕнĕ вăрçа кĕртсе ярас шутпа сарчĕ. Хăйне «мир тăвакан» пек кăтартма ганизацийĕн агрессорла чăмăрĕ пулса тăраççĕ.

«Чăннипе илсен,—тет Сталин юлташ,—ООН халĕ пĕтĕм тĕнчери организаци пулнинчен ытларах американецсемшĕн ĕçлекен, Америка агрессорĕсем хушшине тăвакан организаци пулса тăрать...

Çапла вара Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ Нацисен Лигин намăсла çулĕ çине тăрать. Çавăнпа вăл хăйĕн моралле авторитетне пĕтерет тата хăйне саланса каймалла тăвать».

Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин Парижра пулса иртнĕ юлашки сессийĕнче Америкăн «сасăлакан машини» мĕнле ĕçлени Сталин юлташ калаçнă сăмахсем çав тери тĕрĕс пулнине çĕнĕрен уççăн кăтартса пачĕ.

Америкăпа Англин агрессорла блокĕ урнă пек çĕнĕ вăрçа хатĕрленнĕ условисенче мире хӳтĕлессишĕн аслă кампани сарăлса пыни, мир тăшманĕсен киревсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларни, çĕнĕрен çĕнĕ миллионшар çынсене миршĕн активлă кĕрешме хутшăнтарни тĕнче кунсулĕшĕн калама çук пысăк вырăнта тăрать.

«Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата ăна вĕçне çитиччен хӳтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕревленĕ,—тесе вĕрентет Сталин юлташ.—Вăрçă пуçаракансем халăх массисене суйса пăтраштарма, вĕсене улталама тата вĕсене тĕнчери çĕнĕ вăрçа хутшăнтарма май тупсан, вăрçă пулма пултарать.

Çавăнпа та мире сыхласа хăварассишĕн пыракан аслă кампани, вăрçă пуçаракансен киревсĕр ĕçĕрене тăрă шыв çине кăлармалли хатĕр пулса, халĕ чи малти вырăнта тăрать».

Сталин юлташăн хавхалантаракан чĕнĕвĕ мĕнпур ырă кăмăллă çынсен чĕрине мир ĕçĕ çĕнтерес шанчăк кучĕ. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире хӳтĕлемелли килĕшӳ тума чĕнсе калани çине тĕнчен мĕнпур пайĕсенче 600 миллион çын алă пусрĕ. Миршĕн кĕрешекенсене çав тери хытă хĕсĕрлеççĕ пулсан та, çĕнĕрен çĕнĕ миллионшар ырă кăмăллă çынсем, мĕнле тĕн тытнине, политика çинчен мĕнле шухăшланине пăхмасăр, миршĕн кĕрешекенсен юхăмне хутшăнаççĕ. Мире кĕрешсе илмелле ахаль çынсен ытларах та ытларах ăнланса çитеççĕ.

Мире хӳтĕлекенсен аслă çарĕн малти ретĕнче пирĕн совеглă Тăван çĕршыв пырать.

«Совет Союзне илес пулсан,—терĕ Сталин юлташ,—вăл вăрçа сирсе ямалли тата мире сыхласа хăвармалли политикăна малашне те çирĕп тытса пырĕ».

Совет çыннисем ывăнма пĕлмесĕр мире хӳтĕлеини, мĕнпур çĕршывсенче миршĕн тăракансем тĕнчере хăрушсăрлăха çирĕплетес тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсене совет çыннисем пĕтĕмĕшпех кăмăллани тĕнчери халăхсем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă державă хушшинче мире хӳтĕлемелли килĕшӳ тăвасси çинчен чĕнсе калани çине Совет Союзĕнче 117 миллион çын алă пусни те çакна лайăх кăтартса парать. Миршĕн тăракансем иртнĕ çулхи ноябрьте пулса иртнĕ Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш конференцийĕ, пĕтĕм совет халăхĕн шухăш-кăмăлне палăртса, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Венари сессийĕ йышăннă миршĕн кĕрешмелли программăна чунĕ-чĕререн ырларĕ. Конференцире пулнă çынсем çапла пĕлтерчĕç: совет халăхĕ вăрçă чĕртекенсен киревсĕр планĕсене пĕтерсе лартассишĕн, пĕтĕм тĕнчери çирĕп те нумай вăхăта пыракан миршĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешĕ.

Конференцире 80 çулхи платиностроитель Федор Петрович Половинкин çапла каларĕ: совет çыннисен вăрçă çинчен шухăшлама вăхăт çук Вĕсем çутăрулла, усăллă пысăк ĕç тăваççĕ. Мирлĕ ĕçлевĕ вăхăтра та вĕсем вăрçă чĕртекенсен киревсĕр ĕçĕсене хытă асăрхаса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн таса совеглĕ Тăван çĕршыв çине тапăнма хăвкан кирек мĕнле тăшмана та вăйлă хĕçпăшалпа пĕтсе илме тата ăна тапăнăвал çапса аркатма хатĕр тăраççĕ.

Тĕнчери мĕнпур ырă кăмăллă çынсем пирĕн Тăван çĕршыв çине, мир ялавне çӳлте тытса пыракан аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ çине пысăк шанчăкпа пăхаççĕ. Сталин—мир ялавĕ, вăл—мир шанчăкĕ. Халăхсем хăйсем мире хӳтĕлесе хăварасса пĕлеççĕ. Вĕсем. ăна хӳтĕлесе хăвараççĕ, мĕншĕн тесен аслă Сталин вĕсене çĕр çинче мире хӳтĕлесе тата çирĕплетсе пырассишĕн кĕрешме çутă çул кăтартса пачĕ Вĕсем мире хӳтĕлесе хăвараççĕ, мĕншĕн тесен пĕтĕм малта тăракан этемлĕх телейĕшĕн пыракан кĕрешĕве пирĕн саманари асларан та аслă çын, миршĕн çирĕп кĕрешекен Иосиф Виссарионович Сталин ертсе пырать.



ЛЕНИН—СТАЛИН ĔÇĔШĔН ХĔРӲЛЛĔ КĔРЕШНĔ ÇЫН

(Г. К. Орджоникидзе вилнĕренпе 15 çул çитнĕ май)

Хăюллă пролетариллĕ революционер, большевиксен партийĕпе Совет государствин пултарулăă деятелĕ Григорий Константинович (Серго) Орджоникидзен чĕри тапма чарăннă хурлăхлă кунтанпа вунпилĕк çул иртрĕ.

Çак кристалл пек таса большевикăн мухтавлă та паттăр пурнăçĕ рабочи класс ĕçĕшĕн, коммунизмшăн кĕрешес ĕçре ĕмĕр сӳнми çутă гĕслĕх пулса тăрать. Пурнете çĕнтерекен ленинизм идейисем пурнăçа кĕрессе чунтан-чĕререн ĕненсе, Серго аслăрав та аслă революциллĕ çапăçусен пур йывăрлăхĕсене те паттăррăн тӳссе ирттернĕ. Вăл кĕрсе ĕçленĕ вăхăтра, пысăк пултарулăхĕпе тата ивсĕлни вăй-халĕпе Тăван çĕршывшăн çине тăрса кĕрешнĕ вăхăтра вилсе кайрĕ.

Серго Орджоникидзĕ хăйĕн пурнăçне çамрăклах партипе çыхăнтарнă. Вăл 1886 çулхи октябрĕн 28(15)-мĕшĕнче Грузире, Горешă ялĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Вунçичĕ çулхи çамрăк Г. К. Орджоникидзе 1903 çулта большевиксен партине кĕрет, Ленинпа Сталин вĕрентсе ӳстернĕ революционер-большевик пулса тăрать. Унăн пĕррремĕш учителĕ Сталин юлташ пулнă. Сталин юлташ парти хушнипе 1907 çултан пуçласа Баку хулине—Россирăри рабочисен юхăмĕн чи пысăк центрне пурăнма куçать. Сталин юлташ ертсе пынипе Кавказ леш енчи большевиксем рабочисен массисене большевизм ялавĕ тавра пĕтĕçтерес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, меньшевиксене — ликвидаторсене, эсерсене, кадетсене нимĕн шеллемесĕр тăрă шыв çине кăларса, çĕмĕрсе пыраççĕ, пролетариата çĕнĕ революциллĕ çапăçусене хатĕрлеççĕ. Çак кĕрешӳре, Кавказ леш енчи большевиксен организацийĕн историйĕнче чи паллă страница пулса тăракан кĕрешӳре, Сталин юлташ çирĕп большевик-ленинецсене хăй тавра пĕр чăмăра пĕтĕçтернĕ, унта Орджоникидзе те пулнă. Сталин юлташ ертсе пынипе ĕçлесе, Серго Бакури большевиксен организацийĕн ĕçне активлă хутшăннă, вăл Бакури комитет членĕ пулнă.

Серго Орджоникидзе рабочи класăн аслăрав та аслă çулпуçĕсен, пролетариллĕ революци генийĕсен—Ленинпа Сталинăн чи çывăх соратникĕ, тусĕ, пĕрле кĕрешекен юлташĕ пулнă. аслă çулпуçсен сăнарĕ, вĕсен пурнăçĕпе ĕçĕсен ушăн чи пысăк идеал пулнă. вăл яланах вĕсем пек пулма тăрăшнă. Сергон революциллĕ кĕрешĕвĕ, унăн ниxăтри пек паттăр ĕçĕсем пĕтĕмпех парти кусĕ умĕнче, тӳрех Ленинпа Сталин ертсе пынипе пулса пынă.

Ленин хушнипе пурнăçа кĕртсе. Орджоникидзе вăртăн ĕçленĕ чухне йывăр условисенче РСДРП-ăн 1912 çулхи январь уйăхĕнче пулса иртнĕ Пĕтĕм Россирăри (Прагăри) конференцине организациле тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕç туса ирттернĕ. Меньшевиксене партирен тăвалса кăларса, конференци большевиксене хăйне уйрăм çĕнĕ сăнарлă пролетариллĕ партие, ленинизм партине, большевиксен партине пĕрлештернĕ. Конференци партин Центральнăй Комитетне суйланă тата Россирăри революциллĕ ĕçе ертсе пыма практикăллă центр—ЦК-ăн Вырăс бюровне туса хунă. Çав центра ертсе пыма Сталин юлташа суйланă. ЦК составĕпе ЦК-ăн Вырăс бюровне Орджоникидзе юлташ та кĕнĕ. Конференци хупăнсанах, Ленин хушнă тăрăх Серго И. В. Сталинпа çыхăнма тытма Россирăна таврăнать. Сталин юлташ ку вăхăтра Вологдăри ссылкăра пулнă, конференци ăна хăйсĕр пуçнех ЦК членне суйланă. Сталин юлташпа пĕрле Орджоникидзе çине тăрса ĕçлет, парти организацийĕсене Прагăри конференцин историллĕ решенийĕсем тавра пĕтĕçтерсе пырать.

Анчах Серго ирĕкре нумай вăхăт хутшăнма пурăнаймая Патша охранки ăна хытă хĕсĕрленĕ. Орджоникидзене юлашки хут 1912 çулхи октябрьте Петербургра арестленĕ, унта вăл Ленин хушнă тăрăх тĕнче тутаннă хăюлăхĕпе çирĕплĕхне хуçма пултараймая.

Якутири ссылкăран Серго 1917 çулта тин, февральти революци хыççăн таврăннă.

Социализмшăн кĕрешнĕ пур тапхăрсенче те Серго ялан класс кĕрешĕвĕн чи ответлă участокĕсенче, парти чи пысăк задачăсене татса панă çĕрте пулнă. Вăл октябрьти штурма хатĕрлесе ирттерес ĕçе активлă хутшăннă. Граждан вăрçи вăхăтĕнче Орджоникидзе Совет Çарĕн чи паллă организаторĕсенчен тата çар начальникĕсенчен пĕри пулнă. Совет Çарĕ белогвардеецсен çарне, Америка. Англи, Франци тата ытти интервентсен çарне хирĕç кĕрешсе мухтавлă çĕнтерӳсем тунă. Орджоникидзе çав çĕнтерӳсене организацилекенсенчен пĕри пулнă. Донбаспа Украинăна шурă бандăсенчен ирĕке кăлармалли, Деникин çарне çапса аркатмалли гениллĕ сталинла плана пурнăçа кĕртни Орджоникидзе ячĕпе çыхăнса тăрать. Серго Орджоникидзе çирĕп те хăюллă ертсе пынипе Совет Çарĕн чаçĕсем. Çурçĕр Кавказри тата Кавказ леш енчи халăхсене ирĕке кăларассишĕн çапăçса, хăйсен ялавĕсене ĕмĕр асран каймилле мухтав кӳнĕ.

Граждан вăрçи хыççăн Орджоникидзе партипе государствăн пысăк ĕçне туса пырать. Нумай нациллĕ Кавказ леш енчи кăткăс обстановкăра вăл ленинлла-сталинла наци политикине çав тери лайăх пурнăçа кĕртет, националистсене нимĕн хĕрхенмесĕр тăрă шыв çине кăларать, халăхсен хушшинчи туслăха тусăлăха çирĕплетсе пырать.

1926 çулта парти Серго Орджоникидзене ВКП(б) Центральнăй Контроль Комиссине тата Рабочисемпе хресченсен инспекцийĕн халăх комиссариатне ертсе пыма хушать. Кунта вăл троцкистсемпе бухаринецсене тата ытти ирсĕр сутăнчăксене—партие сапатса яма, пролетариат диктатурине хавшатма хăтланакансене тăрă шыв çине кăларать, вĕсене çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе калама çук нумай ĕçлет. Большевиксен партийĕн ретĕнчи ленинла çирĕп пĕрлĕхе куç шăрçине сыхланă пек сыхласа, Серго партие ленинла Центральнăй Комитет тавра. Сталин юлташ тавра пĕтĕçтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешет.

«Кам Ленин çулĕпе тĕрĕс пырать, кам рабочи класс тăшманĕсене хирĕç тĕрĕс кĕрешет, эпир, большевиксем, ялан çавăн хыççăн пынă, малашне те çавăн хыççăн пырăпăр,—тенĕ Серго партин XVI-мĕш съездĕнче.—Ĕлĕкхи вăхăтрах, хамăр çамрăк чухнех, хăйне курман, хăйне кусăн пĕлмен пулсан та, эпир Владимир Ильич хыççăн пынă, мĕншĕн тесен вăл Марксăн асларан та аслă ученикĕ тата пирĕн саманари пролетариллĕ революцин аслă мастерĕ пулнă.

Паян та эпир Сталин юлташа шанса ун хыççăн хăюллăн пыратпăр, мĕншĕн тесен вăл партие Ленин çулĕпе илсе пынине пĕлетпĕр».

Орджоникидзе социализм строительствин фронтĕнче тунă ĕçсем калама çук пысăк.

Серго сталинла пилĕкçуллăхсен тапхăрĕнчи хуçалăх строительствин чаплă организаторĕ пулнине парти тата пĕтĕм совет халăхĕ лайăх пĕлет, çĕршыва индустриализацилес тата ялхуçалăхне коллективизацилес ĕçре, пирĕн Тăван çĕршыва экономика енĕпе кая юлнă çĕршывран социализмлă индустриллĕ-колхозлă аслă держава туса хурас ĕçре вăл Сталин юлташăн çывăх пулăшаканĕ пулнă. Серго ертсе пынипе йывăр промышленность халиччен нихçан пулман кĕске срокра тĕнчери чи пысăк вăй, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те çĕнĕ техникăпа реконструкцилемелли большевикла хăватлă никĕс пулса тăчĕ.

Орджоникидзе промышленноçра ĕçлекенсене тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар тенĕ, вăл вĕсене чи лайăх техникăна алла илме, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма, унăн хăйне ларакан хакне йӳнетме, производство культурине ӳстерсе пыма ывăнма пĕлмесĕр чĕннĕ.

Г. К. Орджоникидзе яланах хуçалăх руководителĕсене ĕçре партилĕхе çирĕп тытса пыма вĕрентнĕ. «Партилĕх,—чи кирли,—тенĕ вăл хăйĕн сăмахĕсенчен пĕринче—Манас пулмасть, хозяйственник тавра тĕрлĕ çынсем пуласçĕ—пирĕн çынсем те тата ăна хăйсем майлă çавăрма, ăна пăсса яма хăтланакан ют çынсем те пуласçĕ. Çакна хирĕç çирĕп тăма, хăйĕн партиллĕ ăшчикне большевикла сыхлама пĕлекен хозяйственник, директор, цех начальникĕ—пултаракан çын. Кам çул çинчен пăрăнса каять, вăл пĕтет,—унтан нимĕн те тухмасть. Пуриччен малтан партилĕх—чи пахи, чи кирли».

Чăн-чăн большевик, ленинец-сталинец пулса, Серго массăсен ыйтăвĕсем çине, ĕçсыннисен обществăлла пуçарулăхĕ çине çав тери тимлĕ пăхнă, мĕнпур çĕннине, ӳссе, çĕнтерсе пыраканнине тăрăшса пулăшса пынă, рабочи класăн творчествăллă вăйĕсене чунтан-чĕререн шанса, пăнтăхнă та кая юлнă йĕркесем кăштах та пулин палăрнине те вăл тӳсме пултарайман. Вăл социализмлă промышленноçри малта пыракан çынсен чи лайăх вĕрентекенĕ пулнă. Серго стахановла юхăма пуçласа яракансене чи малтан алă панă, çак юхăмра вăл промышленноçăн пулас çитĕнĕвĕсене кăна мар, социализмăн çĕнĕ аслă вăйĕсене курнă.

Г. К. Орджоникидзе вилнĕ хыççăнхи çулсенче пирĕн Тăван çĕршыв çав тери малалла кайрĕ, хуçалăх строительствинче, наукăпа культурăра пур енĕпе те халиччен нихçан пулман пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Ленинпа Сталинăн ученикĕ тата соратникĕ, большевиксен партийĕпе Совет государствин çав тери пултарулăă деятелĕ, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕ пулнă, хăйĕн паттăр пурнăçне пĕтĕмпех халăх телейĕшĕн кĕрешме панă Григорий Константинович Орджоникидзен çутă сăнарĕ совет çыннисене чунтан-чĕререн хавхаланса коммунизм тăвассишĕн кĕрешме чĕнет.

Планран ирттерсе 2,5 миллион кирпĕч туса кăларассишĕн

Çак кунсенче Шупашкарти кирпĕч заводĕнчи рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура «Хальхи тапхăр тата умра тăракан задачăсем çинчен» ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Д. Полукаров юлташ, «Заводăн 1952 çулхи планĕ çинчен» завод директорĕ К. Горюнов юлташ доклад туса пачĕç.

Завод иртнĕ çулта 11 миллион та 700 пин чĕрĕ кирпĕч, 10 миллион та 250 пин хĕртнĕ кирпĕч туса кăларнă, плана чылай ирттерсе тултарнă.

Хулара строительство ĕçĕ çултан-çул вăйланса пырать Çĕнĕ предприятисем, шкулсем ӳссе лараççĕ. Çĕнĕ çуртсем тума паха кирпĕч ытларах та ытларах кирлĕ.

Кирпĕч заводне панă план пĕлтĕрхинчен чылай пысăкрах. Заводăн ку сезонта 12,5 миллион чĕрĕ кирпĕч, 12 миллион хĕртнĕ кирпĕч туса кăлармалла.

Пĕлтĕр завод пĕр преспа ĕçленĕ, кăçал тепĕр пресс ĕçе яма хатĕрленеççĕ. Кирпĕч типĕтмелли пиллĕк сарай тумалла.

Кирпĕч хĕртмелли кăмакара та улшăнусем пулаççĕ: 18 камера вырăнне 36 камера ĕçлемелле.

Заводăн иртнĕ çулта кирпĕч хĕртнĕ чухне чылай тăкаксем пулнă. Завод умĕнче тăракан чылай задачăсенчен пĕри—продукци пахалăхне лайăхлатасси.

Пухура пулнисем докладсене пысăк активлăхпа сӳтсе яврĕç.

Завод механикĕ, вăлах завком председателĕ А. Покровский юлташ коллектив умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлассишĕн пурин те хастарлă ĕçлемелли çинчен калать Вăл сезона лайăхрах хатĕрленме. оборудование пысăк пахалăхпа юсаса хатĕрлеме кирлине палăртрĕ.

Кирпĕч хĕртнĕ çĕрте ĕçлекен, 66 çулхи стахановец Я. Капытев юлташ хумханса сăмах тухса каларĕ.

— План чăн та пысăк ĕнтĕ, ăна тултарма çăмăлах мар. Совет çыннисем йывăрлăхсенчен хăрамаççĕ. Çине тăрса ĕçлени, социализмлă ăмăртăва аслă сарни ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшĕ. Ăмăртса ĕçлесен планран ирттерсе нумай кирпĕч туса кăларма тата хĕртме пултаратпăр,— тет вăл.

Капытев юлташ сменăри задание ирттерсе тултарса пыма, çамрăксене кирпĕч хĕртес ăсталăха вĕрентме сăмах пачĕ.

Пухура пулнисем, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, çĕнĕ обязательствăсем йышăнчĕç.

Вĕсем кăçалхи сезонта планран ирттерсе 2.5 миллион чĕрĕ кирпĕч туса кăларма, 2 миллион кирпĕч хĕртме, пилĕк сарай лартма, топливо тата ытти материалсем перекетлеме пулчĕç.

Завод коллективĕ Ивановăри кирпĕч заводне социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

А. ЖИРНОВ.

ФЗО шкулĕнчен килнĕ çыру

Комсомольски районĕнчен кашни çул вуншар çамрăк ФЗО шкулĕсене вĕренме каять. Вĕсем унта хăйсем юратнă профессие вĕренсе алла илеççĕ Тăван çĕршывăн тĕрлĕ хулисенчи заводсемпе фабрикăсенче ăста рабочисем, мастерсем пулса ĕçлеççĕ. 1951 çулхи ноябрь уйăхĕнче çамрăксен пысăк ушкăнĕ Челябинск облаçĕнчи Прокопьевск хулинчи ФЗО шкулне вĕренме кайрĕ Вĕсем хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе, ялти çамрăксемпе тачă çыхăну тытаççĕ Çырусем ямса хăйсен вĕренӳри çитĕнӳсене каласа параççĕ. Ялти тата колхозри пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлеççĕ.

Нумаях пулмасть ФЗО шкулне «Правда», «Искра», «Хунав», «Красный восток», «Красная звезда», Сталин, Хрущев, Ульянов, Киров ячĕпе тăракан колхозсенчен кайнă çамрăксем районти çамрăксем патне çыру янă. Вĕсем çапла çыраççĕ:

«Эпир пĕлтĕр Прокопьевск хулинчи ФЗО шкулне вĕренме килтĕмĕр. Пире шкул дирекцийĕ ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕ, çитсенех тумлантарчĕç. Вĕренмелле хатĕрсем çителĕклĕ. преподавательсем тăрăн тата çирĕп пĕлӳ пама тăрăшаççĕ. Шкулта тĕрлĕ пултарулăх кружокĕсем ĕçлеççĕ. Драма кружокĕ час-часах спектакль лартса. хор кружокĕ çĕнĕ юрăсем юрласа парать. ФЗО шкулне килнĕренпе кĕнекесем чылай вуларăмăр. Вăхăта культурăллă та савăнăçлă ирттеретпĕр.

Çамрăксемшĕн тăрăшнăшăн эпир партипе правительствăна, Сталин юлташа тав тăватпăр».

Н. КВАСОВ.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăваш АССР государство издательствинче çак кунсенче çакăн пек кĕнекесем тухнă:

Яков Ухсай—Кĕппун мучи. Сăвăлласа çырнă новеллăсем.

Кĕнекере 172 стр., тиражĕ—2.000 экз., хакĕ 5 т. 50 пус.

Д. Мамин-Сибиряк—Улюна юмахĕсем. Пĕчĕк ачасем валли. Вырăсларан Н. Александров куçарнă.

Кĕнекере 48 стр., тиражĕ—4.000 экз., хакĕ—60 пус.

И. Василенко — Ремесленниксем. Повесть. Вырăсларан И Григорьев куçарнă., Ӳкерчĕкесем В. Баюскин художникăн.

Кĕнекере 96 стр., тиражĕ 4.000 экз., хакĕ—2 т. 70 пус.

Февралӗн 15-мӗшӗ | **Вӑрман хатӗрлемелли плана тултармалли стахановла уйӑхлӑх** | Мартӑн 15-мӗшӗ

Вӑрман хатӗрлевне вӑйлатмалла

1951 ҫулта Вӑрнар вӑрманпромхозӗ производство планне срокчен тултарчӗ, Тӑван ҫӗршыва планран ирттерсе пиншер кубометр йывӑҫ хатӗрлесе пачӗ. Уйрӑмах вӑл IV-мӗш кварталта паха тӗслӗхсем кӑтартрӗ. Вӑрманпромхоз коллективӗ, Вӑрнарпа Калинино районӗсенчи колхозниксемпе пӗрле, 1951—1952 ҫулсенчи кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарма социализмлӑ обязательство йышӑнчӗ, ытти вӑрманпромхоз коллективӗсене тата республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсене социализмлӑ ӑмӑртӑва чӗнчӗ.

Вӑрманпромхоз руководителӗсем (директорӗ Васильев юлташ, директорӑн политика енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Н. Кудряшов юлташ) 1951 ҫулхи IV-мӗш кварталта тунӑ ҫитӗнӳсемпе паха опыта ҫирӗплетме тӑрӑшман. Ӑна вӑрманпромхоз юлашки вӑхӑтра япӑх ӗҫлеме тытӑннинчен лайӑх курма пулать. Январь уйӑхӗнче йывӑҫ касса хатӗрлемелли плана 64,7 процент, каснӑ йывӑҫа ҫул хӗррине илсе тухмалли плана 54 процент, турттарса кӑлармалли плана 61,5 процент ҫеҫ тултарнӑ. Ку уйӑхра та ӗҫре улшӑнусем ҫук. Февралӗн пӗррӗмӗш вунӑкунлӑхӗнче вӑрманпромхоз йывӑҫ хатӗрлемелли графика тултарман.

Вӑрманпромхозра 5 электростанци, вӗсенчен тӑваттӑшӗ ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ. Чылай автомашинӑсем ахаль лараҫҫӗ. Механизмсене япӑх ӗҫлеттернине тата ҫакӑнтан курма пулать: январь уйӑхӗнче электростанцисен хӑвачӗпе 83 процент, КТ-12 тракторсен вӑйӗпе—40 процент ҫеҫ усӑ курнӑ. Пӗренесене тиесе пушатас ӗҫе йӗркелемен, ҫавӑн пирки механизаторсем чылай вӑхӑта сая яраҫҫӗ. Ҫулсене вӑхӑтра тата паха юсаманни шоферсен ӗҫ тухӑҫлӑхне чакарать, автомашинӑсене вахӑтсӑр юрӑхсӑра кӑларать. Вӑрманпромхозӑн икӗ автоэлектрокран. Вӗсем иккӗшӗ те юсавлӑ мар. Ҫавӑн пирки пӗренесене автомашинӑсемпе вагонсем ҫине алӑпа тиеҫҫӗ. Ҫулсене юсама ятарласа С-80 трактор туяннӑ. Вӑл та юсавлӑ мар. Рабочисем, алӑ вӗҫҫӗн ӗҫлесе, ҫулсене тӑвӑрт юсама ӗлкӗреймеҫҫӗ.

Коллективра механизмсемпе усӑ курас тӗлӗшпе паха тӗслӗхсем кӑтартакан стахановецсем сахал мар. Электропӑчкӑпа йывӑҫ касса хатӗрлекенсем Никифоров, Семенов. Барласов юлташсем, автомашинӑпа йывӑҫ турттаракан шоферсем Егоров, Осипов юлташсем ӗҫ нормине куллен ирттерсе тултараҫҫӗ.

Ленин ячӗпе тӑракан, «Малый Цивиль» колхозсем государство заданине срокчен ирттерсе пурнӑҫларӗҫ. Жданов ячӗпе тата Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем вӑрман хатӗрлемелли сезонти плана тултармалли уйӑхлӑх ирттерес ӗҫе пуҫӑракансенчен пӗрисем пулчӗҫ.

Вӑрнар райсовет исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ уйрӑм колхозсем вӑрманта лайӑх ӗҫленипе ӑпӑланса ларнӑ, вӗсем ӗҫ хӑй тӗллӗн пулса пырасса шанма тытӑннӑ. Кӑҫалхи январь уйӑхӗнче районти колхозсем стахановла вунӑкунлӑх вӑхӑтӗнчи чухлӗ ҫеҫ йывӑҫ хатӗрлени ҫавӑн ҫинчен калать те ӗнтӗ. План тӑрӑх куллен 215 ҫын ҫуран, 250 ҫын лавпа ӗҫлемелле пулсан, январь уйӑхӗнче вӑтам шутпа 86 ҫын ҫуран, 92 лавҫӑ ҫеҫ ӗҫленӗ. Февраль уйӑхӗнче те вӑрманта ӗҫ вӑйӗ ҫителӗксӗр.

Уйрӑм колхоз руководителӗсем района ҫирӗплетсе панӑ задание малта пыракан колхозсем тултарасса шанса пурӑнаҫҫӗ. Райсовет исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ ҫавӑн пек руководительсен ответлӑхне ӳстерме тӑрӑшмаҫҫӗ, колхозниксене Сталин юлташ патне янӑ ҫырура йышӑннӑ обязательствӑсене чыслӑ пурнӑҫлама мобилизацилемеҫҫӗ.

«Память Ленина» колхоз членӗсем йывӑҫ касса хатӗрлемелли плана ҫуррине ҫеҫ тултарнӑ. Колхозӑн 1.000 кубометр йывӑҫ турттарса кӑлармалла, февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне пурӗ те 22 кубометр ҫеҫ турттарса кӑларнӑ. Киров ячӗпе тӑракан колхоз 1.000 кубометр вырӑнне 141 кубометр ҫеҫ турттарса кӑларнӑ. «Большевик» колхозӑн ҫул хӗррине 2.300 кубометр йывӑҫ илсе тухмалла. Вӑл 570 кубометр илсе тухнӑ. Асӑннӑ колхозсем йывӑҫ касса хатӗрлес тӗлӗшпе те юлса пыраҫҫӗ.

Колхоз председателӗсем Павлов, Федоров тата Чернов юлташсем районти организацисене пӗрмай сӑмахпа шантарса пурӑнаҫҫӗ.—Паян-ыран тата та улшӑну тӑватпӑр, массӑллӑн тухса кайса, заданине кӗске вӑхӑтра пурнӑҫлатпӑр,—ирттараҫҫӗ вӗсем вӑрман хатӗрлевӗ ҫинчен сӑмах тапратсан. Ячӗшӗн пӗчӗк ушкӑн ҫын кӑларса яраҫҫӗ те ӑпӑланаҫҫӗ. Малта пыракан колхоз руководителӗсем колхозниксене хӑйсем ертсе пыраҫҫӗ, ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме, малта пыракансен опычӗпе паллашма пулӑшаҫҫӗ. Асӑннӑ юлташсем апла тумаҫҫӗ, колхозниксен ӗҫӗпе интересленмеҫҫӗ.

Киров ячӗпе тӑракан колхоз лавҫисем 300 метртан йывӑҫ турттараҫҫӗ. Норма тӑрӑх кашни лавҫӑн куллен ултшар кубометр йывӑҫ турттармалла. Ку колхоз лавҫисем ӗҫе ир тухмаҫҫӗ, кунне икшер ҫеҫ хутлаҫҫӗ, кашни лава ҫуршар кубометр кӑна тиеҫҫӗ. Ик-виҫ кун ӗҫленӗ хыҫҫӑн лавҫӑсем лаша апачӗ илсе килме килӗсене таврӑнаҫҫӗ. Колхоз правленийӗ вӑрманта ӗҫлекен лашасем валли сӗлӗпе утӑ леҫтерсе партармасть.

Сезон пуҫланнӑранпа тӑватӑ уйӑх ытла иртрӗ. Вӑрнар районӗ каснӑ йывӑҫа турттарса кӑлармалли плана 64 процент тултарнӑ. Плана тултарас тесен, районӑн тата 7 пин кубометра яхӑн йывӑҫ касса хатӗрлемелле, 17 пин кубометра яхӑн ҫул хӗррине илсе тухмалла тата турттарса кӑлармалла. Плана тултарма районти колхозсен ӗҫ вӑйӗ тата турттӑм вӑйӗ ҫителӗклӗ. Ӗҫе большевикла организацилесе ертсе пыни, стахановла уйӑхлӑха колхозниксемпе колхозницӑсене анлӑ хутшӑнтарни ҫеҫ кирлӗ.

И. СМИРНОВ.

Фермӑра ӗҫлекенсене пулӑшма

Ҫамрӑк тихасене тӗрӗс пӑхса ӳстерер

Ялхуҫалӑх работникӗсем умӗнче ҫакӑн пек задача тӑрать: колхозсемпе совхозсенче кашни кӗсререн ҫулсеренех пӗрер тиха илсе пӑхса ӳстермелле. Ҫак задачӑна ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлассси кӗсресене пурне те чуптарса, пӗтӗлентерсе хӑварнинчен, хӑм пӑрахасран сыхланнинчен килет.

Лаша пӑхса ӳстеракансенчен чылайӑшӗ зоотехника наукин ҫитӗнӗвӗсемпе, малта пыракансен опычӗпе усӑ курса, ку тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳсем тӑваҫҫӗ. Тӗрӗслесе пӑхнӑ тӑрӑх, 1951 ҫулта Советски, Чкаловски, Красноармейски районӗсенче кӗсресенчен 82—88 проценчӗ пӗтӗ юнни паларнӑ.

Пӗтӗ кӗсресене лайӑх пӑхсан, вӗсенчен ҫулсеренех пӗрер тиха илме пулать. Пӗтӗ кӗсре ырхан пулмалла мар, ахалӗн тиха вӑйсӑр, пӗчӗккӗ пулать. Начарланнӑ кӗсрен сӗчӗ те сахал анать, тиха вӑй илеймест. Пӗтӗ кӗсресем хӑм ан пӑрахчӑр теҫе тӑрӑшмалла. Кӗсресем йывӑр турттарнипе, ҫапнипе, шӑнна е пӑсӑлнӑ апат панипе, сивӗ шывпа шӑварнипе хӑм пӑрахма пултараҫҫӗ. Час-часах кӗсресем ырхан пирки те хӑм пӑрахаҫҫӗ.

Опытлӑ конюхсем пӗтӗ кӗсресене шӑварма ҫырмана е ҫӑл патне хӑваласа каймаҫҫӗ, витерех 7—8 градусран кая мар ӑшӑннӑ шывпа шӑвараҫҫӗ.

Лашасене пӗр йышши апатпа, уйрӑмах улӑмпа е витаминсӑр утӑпа тӑрантарнӑ чухне пӗтӗ кӗсресене шӑтарнӑ тырӑ пани аван. Ҫавӑн пек тырра куллен 500 грамм ҫитерни кӗсресене хӑм пӑрахасран сыхланма май парать.

Малта пыракан колхозсенче пӗтӗ кӗсресене ҫӑмӑл ӗҫсем валли, усӑлтарса ҫӳремелле пек, ҫеҫ кӳлеҫҫӗ. Хӑмличчен икӗ уйӑх малтан тата хӑмланӑ хыҫҫӑн 15 кун хушши кӗсресене пур тӗрлӗ ӗҫсенчен те хӑтараҫҫӗ. Вӗсене аслӑ, ҫутӑ, таса пӳлӗмсене (денниксене) вырнаҫтараҫҫӗ, урайне улӑм ытларах сараҫҫӗ. Ӗҫрен хӑтарнӑ кӗсресене стойлӑсенче нӑкарса, пӗр вырӑнта тӑратма юрамасть. Вӗсене куллен 30—45 минутран сахал мар уҫӑлтарса ҫӳретмелле

Кӗсресем хӑмланӑ вӑхӑтра витере куҫӗн-ҫӗрӗн дежурство пулмалла. Кӗсре ҫилли тулни, кӗсре хӑйне канҫӗрӗн туйни, апат ҫименни, час-часах выртни — ҫак паллӑсем кӗсрен хӑмлас вӑхӑт ҫитнине пӗлтереҫҫӗ.

Чипер хӑмланӑ чухне кӗсрене пулӑшу кирлӗ мар. Мӗнле те пулин иньек пулсан вара ветеринари работникӗсене чӗнес пулать.

Ҫуралнӑ хыҫҫӑн малтанхи вӑхӑтра тихана амӑш чӗччине тупма пулӑшмалла. Мӗнле те пулин сӑлтавпа тиха амӑшӗн сӗтне ӗмме пултараймасан, ӑна малтанах амӑшӗн сӗтне суса ӗҫтермелле. Кайран ӑна амӑшне ӗмме вӗрентмелле.

Хӑмланӑ хыҫҫӑн кӗсре пӗр-ик сехетрен хыҫне пӑрахать. Ун пек пулмасан ветеринари пулӑшӑвӗ кирлӗ пулать. Хыҫӗ уйрӑлнӑ хыҫҫӑн кӗсрен хайри урисене, ҫиллине таса шывпа ҫӑваҫҫӗ.

Кӗсрен тирне пӗтӗрнӗ улӑмпа сӑтӑрас пулать. Ҫакӑ вӑл юнҫаврӑнӑшне вӑйлатма пулӑшать. Витере сивӗ пулсан, кӗсрене ашӑкпа витмелле, унсӑрӑн шӑнма чирлеме пултарать. Хӑмланӑ хыҫҫӑн 2—3 кун хушши кӗсрене сӗлӗ памаҫҫӗ, ун вырӑнне сӑсӑл е лайӑх утӑ ҫитермелле. Хӑмланӑ хыҫҫӑнах кӗсрене кӑштах, темиҫе ҫӑвар шыв (тепӗр чухне сӑсӑл пӑтратса) параҫҫӗ. Ик-виҫ сехет иртсен иккӗмӗш хут, ҫур витре таран шыв параҫҫӗ. Шыв температури витери температура чухлӗ пулмалла.

Лайӑх ӗҫлекен конюхсем ӑратлӑ кӗсресенчен ҫуралнӑ вӑйсӑр тихасене кашнине талӑкра 100—150 грамм чухлӗ пулӑ ҫӑвӗ ӗҫтереҫҫӗ. Ку вӑл тихан организмне ҫирӗплеме пулӑшать.

Тепӗр чухне ҫамрӑк кӗсресем хӑйсен тихисене ӗмӗртмеҫҫӗ. Ун пек чух майӗпен хӑнӑхтарни кирлӗ. Ӑна таптӑр тесе, кӗсрене тӑлламалла. Пӗр конюх чӗлпӗртен тытса тӑрать, тепри тихана амӑш чӗччине тупма пулӑшать. Ҫакӑн пек майпа кӗсре тихине ӗмӗртме хӑнӑхать.

Кӗсрен сӗт ҫук пулсан, тихана ӗне сӗчӗ ӗҫтермелле. Ӗне сӗтне малтан виҫҫӗ пайран пӗр пай чухлӗ шывпа хутӑштараҫҫӗ, пӗр литр пуҫне пӗр кашӑк сахӑр яраҫҫӗ. Малтанхи виҫӗ уйӑх хушшинче тихана кашни 1—2 сехетрен, тӑваттӑмӗш уйӑхран пуҫласа—талӑкра 4—5 хут сӗт памалла. Сӗте малтан 38—40 градус таран ӑшӑтас пулать.

Пӗтӗ кӗсресене лайӑх пӑхса усраса тихасене сывӑ, тӗрӗс-тӗкел ӳстерессишӗн кашни колхозрах тимлӗ тӑрӑшмалла.

С. КАРПОВ,
Чӑваш ялхуҫалӑх институчӗн доценчӗ.

Шкулсенче вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатар

(Халӑха вӗрентес ӗҫ ыйтӑвӗпе пухӑннӑ республикӑри канашлуран)

Февралӗн 12—13-мӗшӗсенче Шупашкарта шкулсенчи парторганизацисен секретарӗсен, сутӗҫ органӗсен руководителӗсен халӑха вӗрентес ӗҫ ыйтӑвӗпе республикӑри канашлӑвӗ пулчӗ. Канашлура ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсем пулчӗҫ.

Канашлӑва кӗске сӑмах каласа ВКП(б) Чӑваш обкомӗн пӗррӗмӗш секретарӗ Т. А. Ахазов юлташ уҫрӗ.

Канашлу республикӑра халӑха вӗрентес ӗҫ мӗнле пыни тата вӑл ӗҫе лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен сӳтсе яврӗ. Ку ыйтупа ВКП(б) обкомӗн секретарӗ С. М. Ислюков юлташ доклад туса пачӗ. Докладчик ҫакна палӑртрӗ:

— Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци ӗҫсыннисен культурине ӳстерме тивӗҫлӗ майсем туса пачӗ. Пирӗн социализмлӑ ҫӗршывра чӑп-чӑн культурӑллӑ революци пулса иртрӗ. Сталин юлташ рабочисемпе хресченсене пурне те культурӑллӑ тата вӗреннӗ ҫынсем тумалла тесе каланине ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланса пырать.

Халӑха вӗрентес ӗҫре тунӑ ҫитӗнӳсем чӑннипех те пысӑк. Вӑл пирӗн республика пурнӑҫӗнче те питӗ аван курӑнать. Октябрьти революцичченӗ чӑваш халӑхӗ хушшинче хут пӗлекенсен хисепӗ мӗн пурӗ те 12 процент кӑна пулнӑ. Аслӑ шкулсенчен вӗренсе тухнӑ ҫынсем пӗрерӗн кӑна шутланнӑ. Совет влаҫӗ ҫулӗсенче хут пӗлменлӗхе пӗтерчӗ. Интеллигенцин йышлӑ ҫарӗ ӳсее ҫитӗнчӗ.

— Халӑха вӗрентес ӗҫре,—тет Ислюков юлташ,—пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Шкулсем пурне те обязательнӑй йӗркепе вӗрентесси ҫинчен йышӑннӑ закона ҫителӗксӗр пурнӑҫлаҫҫӗ. Шкул ҫулне ҫитнӗ ачасене нумай ҫӗрте тӗрӗс шута илмеҫҫӗ. Всеобуч законӗ ҫинчен халӑх хушшинче ӑнлантарса парас ӗҫе йӗркелемен.

Партипе совет организацийӗсем всеобуч законне пурнӑҫлассишӗн вӗренӳ ҫулӗ пуҫланас умӗн кӑна мар, пӗтӗм вӗренӳ ҫулӗ тӑршшипе тимлӗн тӑрӑшмалла. Инҫетри ялсенчен вӗренме ҫӳрекен ачасем валли интернатсем ытларах тумалла. Ҫак ӗҫе чылай ҫӗрте халӗ те хакламаҫҫӗ-ха. План тӑрӑх 65 интернат уҫмалла пулнӑ пулсан, паянхи куна 25 интернат кӑна уҫнӑ.

— Шкулсен тӗп задачи вӑл,—тет докладчик,—ачасене тарӑн та ҫирӗп пӗлӳ парасси пулать. Анчах пирӗн шкулсенче вӗренӳре ӑнӑҫсӑр пыраймансем, пӗр класрах икӗ ҫул ларакансен хисепӗ пысӑк. Уйрӑмах Хӗрлӗ Чутай, Октябрьски, Советски тата Красноармейски районӗсенчи шкулсенче вӗренӳре ӑнӑҫсӑр пыраймансем нумай шутланаҫҫӗ. Чылай учительсем урокӗсене япӑх хатӗрленеҫҫӗ, хӑйсен пӗлӗвне ӳстерессипе тӑрӑшмаҫҫӗ, урокӗсенче нагляднӑй пособисемпе сахал усӑ кураҫҫӗ, малтан вӗреннине аса илтерес ӗҫе тимлӗ туса пымаҫҫӗ. Уйрӑмах вырӑс чӗлхине вӗрентес тӗлӗшпе япӑх ӗҫлеҫҫӗ. Ачасем грамматика правилисене тата орфографине кирлӗ пек пӗлмеҫҫӗ, хӑйсен шухӑшӗсене вырӑсла тӗрӗс каласа параймаҫҫӗ, ҫыру ӗҫӗнче кал пысӑк йӑнӑш тӑваҫҫӗ. Вырӑс чӗлхине вӗрентекен учительсем хӑйсен ӗҫне ҫӗнӗлле йӗркелесе ҫитермен.

Ачасене вырӑсла тӗрӗс хулама тата ҫырма вӗрентесси шкулсен ӗҫӗнче тӗп вырӑнта тӑмалла.

Ҫавӑнпа пӗрлех тӑван чӗлхене вӗрентес ӗҫе те пӑтӑклӑнах лайӑхлатмалла. «Тӑван сӑмах пӗтӗм аталанӑвӑн тата мӗнпур пӗлӳсен пуҫламӑшӗн никӗсӗ пулса тӑрать, кирек мӗнле ӑнлану та унтан пуҫланать тата ун урлӑ «тухса пырать»», тесе ҫырнӑ хӑй вӑхӑтӗнче вырӑссен аслӑ педагогӗ Ушинский. Учительсем ҫакна асра тытма тивӗҫ.

Хӑшпӗр районсенчи сутӗҫ пайӗсем чӑваш чӗлхине вӗрентес ӗҫе тивӗҫлипе хакламаҫҫӗ. Чӑваш чӗлхине вӗрентекенсен нумайӑшӗ тивӗҫлӗ пӗлӳ илмен.

Докладчик шкулсенче СССР историне, Конституцине, математикӑпа физикӑна, химие, биологие, географине вӗрентес ӗҫри ҫитменлӗхсене палӑртрӗ. Ҫав ҫитменлӗхсем вӗсем сутӗҫ органӗсем шкулсене тивӗҫлӗ ертсе пыманнинчен, учительсен кадрӗсене ӗҫ участокӗсем тӑрӑх вырнаҫтарас тӗлӗшри ҫитменлӗхсене пӗтерменнинчен килеҫҫӗ.

Халӑха вӗрентес ӗҫе ертсе пырасси ҫинчен каланӑ май, Ислюков юлташ ҫакна палӑртрӗ:

— Халӑха вӗрентес ӗҫе куллен ертсе пырасси пирӗн ҫывӑх та тӑван ӗҫ пулса тӑрать. Шкулсенче коммунизмлӑ обществӑн пулас строителӗсем вӗренеҫҫӗ. Ҫамрӑк ӑру вӑл—пирӗн малашлӑх, пирӗн телей. Шкулсене ертсе пырас ӗҫӗн пӗлтерӗшӗ ҫакӑнтан питӗ лайӑх паларса тӑрать ӗнтӗ. Партин Шупашкар хула комитечӗ шкулсемпе, учительсемпе ялан тачӑ ҫыхӑну тытать, вӗсене ӗҫре пулӑшса пырать. Шкул ыйтӑвӗсене вӑхӑтра сӳтсе явать. Парти хула комитечӗн секретарӗсем шкулсенче час-часах пулаҫҫӗ.

Анчах та парти райкомӗсем пурте ҫавӑн пек ӗҫлемеҫҫӗ-ха. Хӑшпӗр райкомсем халӑха вӗрентес ӗҫ ҫинчен сайра хутра кӑна сӳтсе яваҫҫӗ. Вӑрнар, Кувакино, Калинино, Первомайски райкомӗсем иртнӗ ҫулта шкул ӗҫӗсем ҫинчен икшер хут ҫеҫ сӳтсе явнӑ. Парти райкомӗсем шкулсенчи вӗрентӳпе воспитани ӗҫне куллен тӗрӗслемеҫҫӗ.

— Райкомсен,—тет докладчик,—шкулсенче СССР историйӗпе Конституцине вӗрентес ӗҫе мӗнле йӗркеленине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла, шкулсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерме пулӑшмалла, пуҫламӑш парторганизацисене ҫирӗплетмелле, вӗсен ответлӑхне ӳстермелле. Юлашки вӑхӑтра шкулсенчи пуҫламӑш парторганизацисен хисепӗ чылай ӳсрӗ, анчах вӑл ҫителӗксӗр-ха. Паянхи куна 326 вӑтам шкулпа ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулсенче пуҫламӑш парторганизацисем ҫук. Ҫак ҫитменлӗхе парти райкомӗсем пӗтерме тивӗҫ.

— Партипе совет организацийӗсен, сутӗҫ органӗсен тата совет общественноҫӗн задачи вӑл,—тет юлашкинчен Ислюков юлташ,—шкулсенчи вӗрентӳпе воспитани ӗҫне малалла лайӑхлатса пырассишӗн пӗтӗм вӑй хурса кӗрешесси пулать.

Пренире 22 ҫын тухса каларӗ. Вӗсем шкулсен ӗҫне лайӑхлатма кирлӗ сӗнӳсем нумай пачӗҫ. Малтан Шупашкар хулинчи сутӗҫ пайӗн заведующийӗ Семенова юлташ сӑмах илчӗ.

— Республика столицинчи шкулсенче вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗ чылай лайӑхланчӗ. 25 класра вӗренекенсем пурте вӗренӳре лайӑх ӑнӑҫӑва пыраҫҫӗ. Обязательнӑй йӗркепе вӗрентесси ҫинчен йышӑннӑ закона ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланса пырать. Иртнӗ ҫул хулара икӗ пысӑк шкул уҫӑлчӗ. Атӑл леш енчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул ҫумӗнче интернат уҫнӑ.

ВКП(б) [illegible] райкомӗн секретарӗ Малинина юлташ учительсене политикӑлла воспитани парас ӗҫ ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

— Шкулсенчи вӗренӳ пахалӑхӗ учительсенчен килет,—терӗ вӑл.—Пирӗн районти учительсем хӑйсен пӗлӗвне ӳстерес тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Районти шкулсенче политэкономие, философие, ВКП(б) историне тата марксизм-ленинизм классикӗсен уйрӑм произведенийӗсене вӗренмелли кружоксем туна. Вӗсенче 187 учитель вӗренет. 41 учитель Ленин—Сталин произведенийӗсене харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренет.

Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Салкачӑкри вӑтам шкулти пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ Сорокин юлташ шкулсене учебниксем кӳрсе парас ӗҫ ҫинчен каларӗ.

— Эпӗ математикӑпа физика вӗрентетӗп. Пирӗн шкулта нагляднӑй пособисем сахал пӗрех. Тепӗр чухне вӗренекенсем тетрадьсем те туяса илеймеҫҫӗ. Кӗнеке сутакан организацисем шкулсене учебниксемпе нагляднӑй пособисем ҫитерсе парас пирки сахал интересленеҫҫӗ.

— Шкулсенче вӗренӳре ӑнӑҫсӑр пыраймансен хисепӗ пысӑк,—терӗ ВКП(б) Вӑрнар райкомӗн секретарӗ Орешкин юлташ.—Шкул директорӗсем, районти сутӗҫ пайӗн работникӗсем, Чӑваш АССР Сутӗҫ министерствин инспекторӗсем шкулсен ӗҫне сахал тӗрӗслеҫҫӗ. Уйрӑм учительсем хӑйсен ӗҫӗшӗн ответлӑха туймаҫҫӗ. Пирӗн районти хӑшпӗр учительсем ачасен тетрачӗсене тӗрӗслесе ӗҫе [illegible].

Анчах Орешкин юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче районти парторганизаци халӑха вӗрентес ӗҫе мӗнле ертсе пыни ҫинчен, шкулсене мӗнле пулӑшса пыни ҫинчен каласа памарӗ. Ҫавӑнпа Орешкин юлташа пренире тухса калакан юлташсем тӗрӗс критиклерӗҫ.

Чӑваш педагогика институчӗн директорӗ Евлампиев юлташ учительсен кадрӗсене вӗрентсе хатӗрлес ӗҫ ҫинчен каларӗ. Ҫамрӑк учительсен нумайӑшӗ вӗренӳ ӗҫӗн методикине начар пӗлеҫҫӗ. Вӗсем ачасене воспитани парас енӗпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Кунта педагогика институчӗ те айӑплӑ. Унта студентсене ҫителӗклӗ пӗлӳ параймаҫҫӗ-ха.

— Анчах та,—тет Евлампиев юлташ,—ҫак ӗҫре вӑтам шкулсем те айӑплӑ. Хӑшпӗр вӑтам шкулсенче начар вӗрентеҫҫӗ. Хурамассинчи, Тинӗҫри тата Мураштри вӑтам шкулсенче уйрӑмах вырӑс чӗлхине, математикӑпа тата физикӑпа япӑх вӗрентеҫҫӗ.

Ҫак ыйтӑва Канаш хулинчи 2-мӗш вӑтам шкул директорӗ Романов юлташ та хускатрӗ.

Улатӑр хулинчи сутӗҫ пайӗн заведующийӗ Артамонов юлташ шкулсенче черчени ӗҫне, юрлама, картинӑсем тума тата физкультурӑпа спорт ӗҫне вӗрентес ӗҫе вӑйлатма кирлине палӑртрӗ.

— Ачасене коммунистла воспитани парас ӗҫре шкулсенчи пионерпа комсомол организацийӗсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ,—терӗ ВЛКСМ обкомӗн секретарӗ Федорова юлташ.—Чылай ҫӗрте вӗсем шкул директорӗсене ҫителӗклӗ пулӑшаймаҫҫӗ-ха. Ҫав вӑхӑтрах учительсем те шкулти комсомолпа пионер организацийӗсен ӗҫӗсемпе сахал интересленеҫҫӗ. Сӗнтӗр районӗнчи Нискассинчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулти учитель Пайгусов ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн VII-мӗш пленумӗн итогӗсем ҫинчен сӳтсе явнӑ чухне: «Пионерсемпе ӗҫлесси ман ӗҫ мар, шкулта пионер вожатӑйӗсем пур, вӗсем ӗҫлетчӗр», тенӗ. Йӗпреҫри вӑтам шкулта «Вӗренмелле, вӗренмелле, татах та вӗренмелле» темӑпа пулнӑ пионерсен сборне класс руководителӗсен пӗри те пымаӗ. Ҫакнашкал ҫитменлӗхсемпе текех килӗшсе тӑни пулмалла мар. Парти организацийӗсен, сутӗҫ органӗсен, шкул руководителӗсен комсомолпа пионер организацийӗсене куллен пулӑшса пымалла.

Пуҫламӑш шкулсемпе вӑтам шкулсенче ӗҫлекен работниксен профсоюз обкомӗн председателӗ Ухватов юлташ учительсен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатассишӗн ытларах тӑрӑшма кирлине палӑртрӗ. Вӑл уйрӑмах Ҫӗрпӳ, Чурачӑк, Комсомольски тата Калинино районӗсенче учительсем валли хватерсем тумани ҫинчен каларӗ.

Шупашкарти хӗр ачасен 1-мӗш вӑтам шкулӗн директорӗ Сычева юлташ учительсен коллективӗн ӗҫӗнчи паха опытпа паллаштарчӗ. Унта учительсем пурте марксизм-ленинизм теорине тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ, хӑйсен квалификацине ӳстереҫҫӗ. Идейӑллӑ-политикӑллӑ пӗлӳне ӗҫри квалификацие ӳстерсе пыни шкулти вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатма пулӑшать. Кунта вӗренӳре ӗлкӗрсе пыраймансен хисепӗ чылай чакнӑ. Класс тулашӗнчи ӗҫе те лайӑх йӗркеленӗ. Пионерсем вӗренӳре ӗлкӗрсе пыраймасан ачасене пулӑшаҫҫӗ. Пионерсен сборӗсем активлӑ, интереслӗ иртеҫҫӗ.

— Пирӗн шкул коллективӗ,—тет оратор,—вӗренекен ачасен ашшӗ-амӑшӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлет. Ачасен ашшӗ-амӑшӗсем хушшинче учительсем час-часах лекцисемпе калаҫусем ирттереҫҫӗ. Нумаях пулмасть ачасен ашшӗ-амӑшӗсен пухӑвӗ пулса иртнӗ. Унта вӗренӳ ҫулӗн малтанхи ҫур ҫулӗнче тунӑ ӗҫсен итогӗсем ҫинчен каласа панӑ.

— Эпир,—тет Сычева юлташ,—тӑлӑх ачасене вӗренме лайӑх условисем туса парассишӗн тӑрӑшатпӑр. Вӗсем валли ятарласа фонд тунӑ. Ҫак фонда тума ачасен пултарулӑх коллективӗсем темиҫе хутчен концертсем ирттернӗ, тимӗр-тӑмӑр тата савӑт-сапа нумай пухса панӑ.

— Пирӗн парторганизаци,—терӗ Комсомольскинчи вӑтам шкулти пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ Кокарев юлташ,—шкул директорне кулленхи ӗҫре пур майсемпе те пулӑшса пырать. Пурне те обязательнӑй йӗркепе вӗрентесси ҫинчен йышӑннӑ закона мӗнле пурнӑҫласа пыни ҫинчен парторганизаци пухӑвӗнче сӳтсе явнӑ. Шкул ҫулне ҫитнӗ ачасем халӗ пурте вӗренме йӗркеллӗ ҫӳреҫҫӗ.

Парторганизаци малта пыракан учительсен опытне пропагандӑлас тӗлӗшпе те нумай ӗҫсем туса ирттернӗ. Лайӑх ӗҫлекен учительсем хӑйсен ӗҫ опычӗсем ҫинчен час-часах докладсем туса параҫҫӗ.

Парторганизаци ертсе пынипе учительсем шкул ачисен ашшӗ-амӑшӗсем хушшинче куллен ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем педагогика ыйтӑвӗсем тӑрӑх лекцисемпе докладсем тата калаҫусем ирттереҫҫӗ. 17 учитель ялти лекторинче ӗҫлет. Иртнӗ ҫулта вӗсем 70 лекци туса панӑ.

Кокарев юлташ парти райкомӗсем пуҫламӑш парторганизацисене мӗнле ертсе пыни ҫинчен каласа пачӗ.

— Ку ӗҫе ҫителӗклӗ теме май ҫукха,—тет вӑл,—парти райкомӗсем пире, пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсене, семинара сайра хутра кӑна чӗнеҫҫӗ, пирӗн ӗҫе тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ. Ҫак ҫитменлӗхе парти райкомӗсен малашнехи вӑхӑтра пӗтерсе пымалла.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗн заместителӗ Андреев юлташ республикӑра пурне те обязательнӑй йӗркепе ҫичӗ ҫул вӗрентмелли закона мӗнле пурнӑҫласа пыни ҫинчен тата шкулсене ҫӗнӗ, 1952—53-мӗш вӗренӳ ҫулне хатӗрлес тӗлӗшпе тӑракан задачӑсем ҫинчен каларӗ.

— Нумаях пулмасть,—терӗ вӑл,—Мурташ районӗнчи ӗҫсыннисемпе общество организацийӗсем паха пуҫару турӗҫ. Вӗсем, шкулсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрлес тӗлӗшпе социализмлӑ обязательство илсе, ытти районсене те ӑмӑртӑва чӗнчӗҫ. Ҫак чӗнӗве пур ҫӗрте те халех сӳтсе явмалла, вӗренӳ ҫулне хатӗрленес тӗлӗшпе обязательствӑсем илес ӗҫе йӗркелемелле, вӗсене ҫийӗнчех пурнӑҫлама тытӑнмалла.

Пренире ҫавӑн пекех Чӑваш АССР Сывлӑх министерствин ачасен сывлӑхне сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен пайӗн начальникӗ Арзамасова юлташ, Елчӗк районӗнчи сутӗҫ пайӗн заведующийӗ Алексеева юлташ, Кувакино районӗнчи Сурмайларри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулти пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ Телегин юлташ, Чӑваш АССР Ҫутӗҫ министрӗ Токарев тата ытти юлташсем те тухса каларӗҫ.

* * *

Февралӗн 13-мӗшӗнче шкулсенчи пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсен семинарӗ пулса иртрӗ. Семинарта виҫӗ лекци пулнӑ. ВКП(б) обкомӗн пропагандӑпа агитаци пайӗн заведующийӗ М. С. Семенов юлташ «Учительсем хушшинче марксистла-ленинла теорие вӗренес ӗҫе йӗркелесси ҫинчен»; ВЛКСМ Чӑваш обкомӗн секретарӗ В. Ф. Федорова юлташ «ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн VII-мӗш пленумӗ В. И. Ленин ячӗпе тӑракан пионер организацийӗн ӗҫӗсем ҫинчен йышӑннӑ решенисем пирки»; ВКП(б) Чӑваш обкомӗн аслӑ шкулсемпе шкулсен пайӗн заведующийӗ А. М. Шалфеева юлташ «Шкулти парторганизацисен ӗҫне йӗркелесси ҫинчен» лекцисем туса панӑ.

Н. В. Гоголь вилнӗренпе 100 ҫул ҫитес умӗн

ВӐРНАР. Кольцовкӑри Ленин орденӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхозра вырӑссен аслӑ писателӗ Н. В Гоголь вилнӗренпе 100 ҫул тултарнӑ куна паллӑ тума хатӗрленеҫҫӗ.

Вӑтам шкулти литература преподавателӗсем Л. Смирнов тата И. Степашин юлташсем колхозӑн лекторинче тата радио тӑрӑх «Н. В. Гоголь—вырӑссен аслӑ писателӗ», «Гоголӗн пурнӑҫӗпе творчестви» темӑсем тӑрӑх лекцисем вулаҫҫӗ.

Колхозри агитаторсем те кашни вунӑ килте пухса ку темӑсем тӑрӑх калаҫусем ирттереҫҫӗ.

Кольцовкӑри клубра тата Зеленовкӑри вулав ҫуртӗнче аслӑ писателе асӑнса выставкӑсем, вӑл ҫырнӑ кӗнекесен витринне тунӑ. Вулав ҫуртӗнче Н. В. Гоголӗн «Тарас Бульба», «Мертвые души» кӗнекисене ушкӑнпа пухӑнса вулассине йӗркеленӗ.

Н. ЛЕОНИДОВ.

Редакцие килнӗ ҫырусем

Райпо ҫителӗксӗр ӗҫлет

ШӐМӐРШӐ. Райпо 1951 ҫулхи тавар ҫаврӑнӑш планне тултараймарӗ. Район центрӗнчи тата ялсенчи магазинсенче халӑха куллен кирлӗ таварсем ҫителӗксӗр. Нумай магазинсенче ассортиментпа пӑхнӑ таварсем ҫук. Лавккасенче, сӑмахран, нумайранпа ӗнтӗ крассын ҫук. Райпо работникӗсем ҫаврӑнӑҫсӑррине пула, потребительсене крассын, супӑнь, табак илме ирӗксӗрех Тутар республикинчи ялсене кайма тивет. Мӗншӗн ҫитмеҫҫӗ-ха ҫак таварсем? Райпо председателӗ Леонтьев юлташ Канашри базӑран тавар илсе килме турттӑм вӑйӗ ҫукки ҫине ярать. Чӑнах та, райпора турттӑм вӑйӗ ҫителӗксӗр. 2 лаша тата пӗр юрӑхсӑр автомашина ҫеҫ. Вӗсем пекарньӑпа столовӑй валли тата райпо работникӗсем валли вутӑ кӳрсе тӑраҫҫӗ. Канашри базӑран тавар кӳрсе тӑма ӗлкӗреймеҫҫӗ...

Кӑштах ӗҫ дисциплини ҫинчен. Ӗҫ дисциплинине кунта, райпо председателӗнчен пуҫласа магазин хуралҫисене ҫитиччченех, пурте пӑсаҫҫӗ. Райпо кантурне заняти пӗтиччӗн пӗр сехет маларах пырсан никама та тупма ҫук. Пурте занятие «пӗтерсе» кайнӑ. Райпо председательне Леонтьев юлташа тата база заведующине Шипунов юлташа ӗҫ вӑхӑтӗнче час-часах ӳсӗр курма пулать.

Ялсенчи магазинсем, сӑмахран, Кивӗ Чукалти, Шамкайри, Ҫӗнӗ Чукалти магазинсем эрнере 3—4-шар кун хупӑ тӑраҫҫӗ, ӗҫленӗ кун та 3—4 сехет хушши ҫеҫ усӑ пулаҫҫӗ. Продавецсем кашни эрнерех Шӑмӑршӑпа тавар илме е отчетпа кайса, 2—3 кун ирттереҫҫӗ. Хӑшпӗр чухне, база заведующийӗ Шипунов юлташ «пушӑ мар» пулнипе, тавар илеймесӗрех кайнисем те пулкалаҫҫӗ.

Шӑмӑршӑ райпо аппаратӗнче ҫирӗп дисциплина туса хума вӑхӑт ӗнтӗ.

П. ДЕНИСОВ,
Кивӗ Чукал ял Совечӗн секретарӗ.

Хӑҫан гараж туса параҫҫӗ-ши?

ПЕРВОМАЙСКИ. «Правда» колхоз автомашина туяннӑранпа пилӗк ҫул ҫитрӗ. [illegible] Анчах ӑна лартма халӗ те гараж ҫук-ха. Хальхи вӑхӑтра автомашинӑна вылькӑх вити картишне кӗртсе лартма тивет. Ҫавӑн пирки кулленех машинӑн вак-тӗвек пайӗсем ҫухалаҫҫӗ.

Кашни ҫулах правлени ларӑвӗсенче тата колхозниксен пухӑвӗнче гараж тума йышӑнса хӑвараҫҫӗ. Анчах правлени, тӗрлӗ сӑлтавсем тупса, ҫав решенисене пурнӑҫламасӑр хӑварать. Правлени председателӗ Г. Пыркин юлташ «ҫӗнӗ автомашина туянсан гараж тӑватпӑр», тесе ответлет.

Ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗ колхоз пурлӑхне хытӑ сыхлама хушать. Автомашина хаклӑ пурлӑх, ӑна кирек хӑш вӑхӑтра та туянма ҫук. Ҫавӑнпа та ӑна май килнӗ таран лайӑх пӑхса усрамалла.

Ф. КОШКИН,
колхоз шоферӗ.

„Чӑваш коммуни" хаҫатра ҫырнӑ хыҫҫӑн

„Матвеев каллех шкулта..."

«Чӑваш Коммуни» хаҫатра январӗн 5-мӗшӗнче пичетленнӗ «Матвеев каллех шкулта...» ятлӑ фельетонра Первомайски районӗнчи Ишлӗри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта учителе вӗренсе тухман П. Н. Матвеев, суя документсемпе пурӑнса, учительте ӗҫлени ҫинчен ҫырнӑччӗ.

Чӑваш АССР Ҫутӗҫ министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, П. Н. Матвеева ӗҫрен кӑларнӑ.

„Ҫуракине хатӗрленес ӗҫ юлса пырать"

1952 ҫулхи январӗн 23-мӗшӗнче «Чӑваш Коммуни» хаҫатра «Ҫуракине хатӗрленес ӗҫ юлса пырать» ятлӑ ҫыру пичетленнӗ. Унта Чкаловски районӗнчи чылай колхозсенче ҫуракине хатӗрленес ӗҫе вӑраха тӑсса пыни, агрозоотехника курсӗсенчи вӗренӗве кирлӗ пек йӗркелеменни ҫинчен ҫырнӑччӗ.

ВКП(б) Чкаловски райкомӗ материала бюро ларӑвӗнче сӳтсе явни, асӑннӑ ҫитменлӗхсене пӗтерме мерӑсем йышӑнни ҫинчен пӗлтерчӗ. Район Совет исполкомӗн ялхуҫалӑх пайне, колхоз правленисемпе пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене хӗлле тумалли агротехника ӗҫӗсене вӑйлатма, колхозниксен вӗренӗвне лайӑхлатма хушнӑ.

„Вырӑнти удобренисене ытларах хатӗрлемелле"

Кӑҫалхи январӗн 25-мӗшӗнче «Чӑваш Коммуни» хаҫатра «Вырӑнти удобренисене ытларах хатӗрлемелле» ятлӑ корреспонденци пичетленнӗччӗ. Унта Первомайски районӗнчи чылай колхозсенче удобренисемпе усӑ курас ӗҫе кирлӗ пек йӗркелеменни ҫинчен ҫырнӑччӗ.

Корреспонденцие райсовет исполкомӗн ларӑвӗнче сӳтсе явнӑ, ҫитменлӗхсене тӳрлетме палӑртнӑ.

Материал тӑрӑх решени йышӑннӑ. Ялхуҫалӑх пайне, МТС-а, колхоз правленийӗсене удобренисене хатӗрлес, уй тисклӗсене практикӑлла пулӑшу пама хушнӑ. Колхозсем сумне ялхуҫалӑх специалисчӗсене ҫирӗплетнӗ.

Тĕнчери лару-тăру

ВАСКАСАХ ХĔÇПĂШАЛ НУМАЙ ХАТĔРЛЕНИ США ЭКОНОМИКИНЕ ХАВШАССИНЧЕН ÇĂЛСА ХĂВАРАЙМАСТЬ

Кашни кун килсе тăракан хыпарсем çакăн çинчен калаççĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче влаçра тăракансем васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлес ĕçе анлă сарни çĕршывра экономика кризисĕ пуласси нчен хăтараймасть, пачах та урăхла, васкасах хĕçпăшалланни Америка экономики хавшанине хăвăртлатать.

«...Çĕршыв хуçалăхне çар экономикин çулĕ çине куçарни мĕне пĕлтерет-ха?—тесе калать И. В. Сталин юлташ.—Çакă вăл промышленноçа пĕр енĕпе, çар ĕçĕ енĕпе аталантарса пырассине, вăрçă валли кирлĕ япаласене, халăха кулленхи пурнăçра кирлĕ мар япаласене, тăвас ĕçе пур майсемпе те сарса пырассине, халăха куллен кирлĕ япаласене тăвас тата вĕсене сутма кăларас ĕçе пур майсемпе те чакарса пырассине пĕлтерет,— апла пулсан, халăх хăйне кирлисене сахалтарах илсе тăмалла пулассине тата çĕршыва экономика кризисĕ патне илсе çитерессине пĕлтерет».

Вăрçа хатĕрлеме тухакан питĕ пысăк расходсене витме США правителĕсем налогсене калама çук нумай ӳстерчĕ, ун пек пысăк налогсем пухни çĕршыв историйĕнче халиччен нихçан та пулман. Америкăри «Ньюс-Уик» журналта çырнă тăрăх, США-ри халăх хальхи вăхăтра федеральнăй хыснана тĕрлĕ налогсем 63,7 миллиард доллар, вырăнти органсене (штатсемпе хуласенчи финанс органĕсене)—19 миллиард доллар тӳлет. Çав журнал шута илнĕ тăрăх, США правителĕсем хальхи вăхăтра çĕршывăн наци тупăшĕн 30 процентне налогсем вырăнне шутласа илеççĕ, çавна вĕсем пуринчен ытла хĕçпăшал хатĕрлеме тата хĕçпăшаллă вăйсене тытса усрама параççĕ.

Налог нумай шыраса илнине халĕ те тӳсме питĕ йывăр пулин те, США-ра влаçра тăракан ушкăнсем налогсене тата нумай ӳстереççĕ, çавна пула халăх хăйне кирлĕ таварсене туянма пултарни чакса пырать. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен резервсем тĕлĕшпе ĕçлекен федеральнăй управленийĕ шута илнĕ тăрăх, 1951 çулхи мартпа апрель уйăхĕсем хушшинчи тапхăрта халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларни США-ра 37 процент чакнă. «Таварсем илни нихçанхинчен хытă чакрĕ, çавна май производство чакса пыма, ĕççĕр тăрса юлнисен йышĕ ӳссе пыма тытăнчĕ», тесе çырнă нумай пулмасть «Джорнал оф коммерс» хаçат. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен перепись бюровĕ шута илнĕ тăрăх, 1951 çулхи декабрь уйăхĕн пуçламăшĕпе 1952 çулхи январь уйăхĕ пуçланнă тĕле, пĕр уйăх хушшинче, пĕтĕмпе 1.288 пин çын ĕççĕр тăрса юлнă. Çĕршывра «инкеклехнĕ районсем» нумайланнă, çав районсенче ĕççĕр тăрса юлнă çынсен йышĕ мĕнпур рабочисемпе, служащисен хисепĕнче 12 процент е унтан та нумайрах пулать.

Ĕççĕр тăрса юлнисен йышĕ нумайланнипе усă курса, США промышленникĕсемпе фабриканчĕсем рабочисен ĕç укçине тата нумайрах чакарма тытăннă. 1951 çулта пир-авăр фабриканчĕсем питĕ пысăк услам илнĕ пулин те, пир-авăр промышленноçĕнчи 56 пысăк компани рабочисен ĕç укçине татах 25 процент чухлĕ чакарасси çинчен, çав вăхăтрах рабочисен хăйсен ĕç тухăçлăхне 50 процент ӳстермелли çинчен пĕлтернĕ. Кăçалхи февралĕн 4-мĕшĕччен 29 пысăк пир-авăр фабрикинче рабочисен ĕç укçине чакарнă та ĕнтĕ. Кун çинчен нумай пулмасть Федерейтед пресс агентстви пĕлтернĕ.

Америка экономикинчи хальхи лару-тăру çинчен çырса, США-ри ĕç ыйтăвĕсене наука енĕпе тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекен прогрессивнăй ассоциаци нумай пулмасть çакна палăртнă: «Экономика кризисĕ Америка капитализмĕн тĕп уйрăмлăхĕсенчен пĕри пулса тăрать... Çав кризис сыхарни США политикине палăртса пыракан банкирсемпе дипломатсене çĕнĕрен питĕ хытă шиклентерет... США васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрленипе кризис çыхарассине сирсе ярайманрĕ. Америкăри предприятисене тытса тăмалли система çирĕп пулни çинчен ултă çул хушши хытă шавларĕç пулсан, хальхи вăхăтра çавăн çинчен каласма пăрахаççĕ, халĕ экономикăра кризис çывхарни çинчен хăраса ӳксе калаççĕ... «Трумэн — Даллес — Уолл-стрит» ушкăнĕ США экономикин, хĕçпăшалланма питĕ пысăк расходсем кăларни çине таянса тăракан экономикăн условийĕсем çирĕп пулассине шанса тăни тĕрĕс мар пулни уççăнах курăнчĕ», тесе пĕлтерет юлашкинчен ассоциаци.

США-ри влаçра тăракансем васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлени Пĕрлешӳллĕ Штатсене питĕ йывăр экономикăллă кризисран çăлса хăварма пултарассине хытă шанса тата ĕненсе тăни çапла арканса пырать.

ПУРНĂÇА КĔМЕ ПУЛТАРАЙМАН ПĔР ЕМĔТ ПУТЛАНСА ЛАРНИ

Америка империалисчĕсем хăйсене пăхăнса тăракан Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен хăйсем тĕллĕн пурăнмалли прависене тĕппипех пĕтересе лартма, вĕсенчен «Пĕрлештернĕ Европа», космополитла система, туса хума нумай çулсем хушши тăрăшаççĕ. Вĕсем çав пĕрлешĕве экономикăпа политика тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпех США-на пăхăнтарасшăн, ăна США контролĕпе тăмалли йĕрке тăвасшăн. Çавна пурнăçлас тĕлĕшпе Америка империалисчĕсем ятарласа план хатĕрленĕ. Малашне пулмалли «Пĕрлештернĕ Европăн» экономика никĕсне хатĕрлеме хăтланса, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăй вăхăтĕнче туса хунă организаци — Европăра экономика енĕпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлемелли организаци—«Маршалл планне» йышăннă çĕршывсене Америка монополисчĕсене пăхăнтарма хытă тăрăшать.

Юлашки вăхăтра Хĕвеланăç Европăри чылай çĕршывсем «Маршалл планне» йышăннă ытти çĕршывсенчен таварсем сахалтарах илсе пымалли йĕрке туме тытăннă. Пуринчен малтан çавăн пек ĕçсене Хĕвеланăç Германипе Англире тунă. Вĕсене курса Франци правительстви те февраль пуçламăшĕнче чылай йышши таварсене урăх çĕршывсенчен кӳрсе килме чармалли йĕрке тунă. Халиччен урăх çĕршывсенчен Францие ирĕклĕн кӳрсе пынă таварсен 75 процентне, çав шутра тĕштырă, çăнăх, ĕçмелли, пулă, пир-авăр, автомобильсемпе тракторсене урăх çĕршывсенче туянма чарнă.

Малашне ĕнтĕ çав таварсене Франци илсе пыма уйрăм решени кирлĕ.

Ку решение мĕншĕн йышăнни çинчен каласа, Франци правительствин пуçлăхĕ Эдгар Фор парламентра çапла пĕлтернĕ: Францин ылтăнпа ют çĕршывсен укçисен запасĕ кунтан-кун чакса пырать, çав запассене сыхласа хăварас шутпа урăх çĕршывсенчен таварсем кӳрсе килессине чарса лартмалла пулчĕ, тенĕ. Фор çавăн чухне анлă мĕн çинчен нимĕн те шарламан: США правительстви хăйне пăхăнса тăракан ытти çĕршывсен правительстви сене гражданла промышленность валли чĕр тавар тата тырпул кӳрсе пырассине чарса лартма, çапла майпа перекет ленĕ ылтăнпа Америкăра хĕçпăшал туянма хушнă. Çак ĕçсем вара Франци экономикине нумай хавшатаççĕ тата çĕршыври ĕççынни массисен пурнăçне хытă начарлатаççĕ.

Англие, Хĕвеланăç Германие тата Францие таварсем кӳрсе пырассине чарнă пирки Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенче нумай шавлаççĕ. Франци правительстви çавăн пек решени йышăннă пирки уйрăмах Италипе Бельгире хытă шикленеççĕ. Вĕсем халиччен хăйсен таварĕсене урăх çĕршывсене пуринчен ытларах Франци урлă сутса тăнă. Франци урăх çĕршывсенчен таварсем илсе пыма чармалли йĕрке туни Италипе Бельги промышленноçĕсен чылай отраслĕсенче япаласем туса хатĕрлесси тата ытларах чакасси патне, апла пулсан, çав çĕршывсенче ĕççĕр тăрса юлнă çынсен йышĕ тата ытларах ӳсесси патне илсе пырать, тесе çыраççĕ хаçатсем.

«Европăри пĕрлĕх» çинчен нумай хут каланă хыççăн, Франци правительстви çавăн пек ĕç туни йышăнни Италие экономикă енĕпе кăна мар сиен кӳрет, «политика енĕпе те ĕçсем анăçлă пулса пырассине шанман шухăш» сарма, хăрушлăх туса хума пултарать, тесе çырать Италири «Темпо» хаçат.

Европăри промышленноçпа суту-илӳ ĕçне ертсе пыракансен нумай представителĕсем Уолл-стритăн васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлемелли, милитаризма вăйлатмалли тата ытти çĕршывсене хушса тăмалли политики Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен экономикăллă çыхăнăвĕсене аркатассине. «Маршалл планне» йышăннă çĕршывсен хуçалăхĕсем тата ытларах юхăнасси патне илсе пырассине уççăнрах та уççăнрах кураççĕ, çавна лайăхрах ăнланса илеççĕ.

ЭЙЗЕНХАУЭР США-на ПĂХĂНСА ТĂРАКАН ÇĔРШЫВСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ХĔСЕТ

Америка генералĕ Эйзенхауэр хальхи вăхăтра Хĕвеланăç Европăра çар пухма, Америкăн авантюрăллă вăрçисенче вилсе пĕтмелли салтаксене пухма хытă тăрăшать. Эйзенхауэр генерала пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракансен юхăмĕ вăйланса пыни хытă тарăхтарать. Çак юхăм анлă сарăлнă пирки Хĕвеланăç Европăри государствăсен правительствисен ирĕксĕрех халăхсем миршĕн тăнине шута илме тивет, çакă вара Америкăри вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсене хăйсен планĕсене пурнăçлама чăрмантарать.

США-н жĕçĕн партнерĕсен—агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика союзĕнче тăракан çĕршывсен правительствисен шухăшне ирĕксĕрех шута илме тивнĕ пирки Эйзенхауэр урса кайнă. Вăл халĕ асăннă союза ертсе пырас ĕçе тĕпренех урăхлатма шут тытни çинчен ют çĕршывсенчи хаçатсем пĕлтереççĕ. Çурçĕр Атлантика союзĕнче 12 çĕршыв тăрать. Çав çĕршывсен представителĕсенчен тĕрлĕ комитетсем нумай тунă. Эйзенхауэр çав «сӳпĕлтисен комитечĕсене» салатса яма шутлать, тесе çырать Швецири «Ню даг» хаçат. Вĕсем вырăнне Эйзенхауэр Çурçĕр Атлантика блокĕнчи виçĕ пысăк çĕршыв (США, Англи тата Франци) представителĕсене тата ытти вак çĕршывсен икĕ представительне кĕртсе «политика комитечĕ» тума шутлать. Çурçĕр Атлантика блокĕн ĕçĕсене туса пынă çĕрте «çар совечĕ» тĕп вырăнта тăмалла. Унта Эйзенхауэрпа пĕрле тата тепĕр тăватă генерал пулмалла. Комитета Эйзенхауэр ертсе пымалла. Çапла вара, Америка çыннисем Çурçĕр Атлантика союзне ертсе пырас ĕçре хăйсем пуç пулса тăма, хăйсен диктатурине çирĕплетме шутлаççĕ. Анчах çакăн пек туни те Америка генералне, Уолл-стрит Европăра пуç пулса тăма уйăрса лартнă çынна çитмест-ха. «Маршалл планне» йышăннă Хĕвеланăç Европăра пĕр çулталăк хушши çар губернаторĕ пулса пурăннине увăланă май Эйзенхауэр хăйĕн шухăшĕсене пĕлтерме темиçе заявлени тунă. Çав заявленисенчен вăл Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен никама пăхăнмалăх прависене, вĕсем уйрăм государствăсем пулса тăнине пĕтĕмпех пĕтерсе лартма шутлани курăнать.

Январĕн 22-мĕшĕнче Эйзенхауэр хăйĕн штабĕнче пресс-конференци пухнă. Унта вăл Хĕвеланăç Европа халĕн пек, «нумай çĕршывсене пайланнипех, экономика енĕпе урăх государствăсене пăхăнса тăракан вак çĕршывсенĕ пулнипех илсен, вăй илме тата çирĕпленме пултараймасть», тенĕ. «Хĕвеланăç Европăри государствăсен экономикăллă союзне тăвас пулать, кунсăр пуçне çав йывăрлăхран тухма мĕнле те пулин урăхла май пурри энĕ курмастăп. Политика енĕпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемесен, экономикăллă союз анăçлă пулассине энĕ курмастăп», тенĕ вăл. Эйзенхауэр Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен «конституци конвенцине» пухма, унта «федераци» тăвасси çинчен сӳтсе явма сĕннĕ.

Эйзенхауэр сĕнĕвне Вашингтонра пĕр тăлтаса тăмасăр йышăнса çирĕплетнĕ. Кун çинчен пресс-конференцире январĕн 23-мĕшĕнче государство секретарĕ Ачесон пĕлтернĕ. Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен «федерацине» тăвас шухăша Америкăри хаçатсем тем тĕрлĕ те ырласа, çав федераципе туни «пысăк усă парасси» çинчен çырнă, чăннипе çав федераци вăл доллара пăхăнакан сиенлĕ правасăр колонисен ушкăнĕ пулса тăмалла.

Анчах çав шухăша Хĕвеланăç Европăра ырламан. Англи халăхĕ тата ытти халăхсем çав шухăша ырламаннине, кун пирки халăхсем тарăхнине шута илсе, Лондонри «Ньюс кроникл» хаçат: «ку ыйтупа татăклă решени йышăнма Франци, Бельги тата ытти çĕршывсем иккĕленсе тăрĕç», тесе çырнă.

Хĕвеланăç Европăри çĕршывсене доллара пăхăнса тăракан колонисем туса хума тăрăшнине хирĕç çав çĕршывсенчи халăх протестлет. Халăх протесчĕ кунтан-кун вăйланса пырать. Çав протест Америка империалисчĕсем авантюрăллă ĕçсем тума хăтланнине путлантарĕ.

В. МОРЕВ.

Китай халăхĕ Китайпа Совет Союзĕ договор тунăранпа икĕ çул тултарнине палăртать

ПЕКИН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 14-мĕшĕнче пĕтĕм Китай халăхĕ Китайпа Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор туса алă пуснăранпа икĕ çул тултарнине анлă палăртнă. Шанхайра Китайпа Совет Союзĕн туслăх обществин Хĕвелтухăç Китайри тĕп уйрăмĕн ларăвĕ пулнă, ăна ытти демократиллĕ обществăллă организацисемпе пĕрле ирттернĕ. Ларура 2 пин çын ытла пулнă. Нанкинри ларăва 1.800 çын ытла пухăннă.

Савăнăçлă ларусем Уханьре, Сианьре, Тяньцзиньре, Цзинаньре, Наньнинра, Ханчжоура, Циндаора, Китайри тата ытти хуласенче те пулса иртнĕ. Ларусенче Китайпа Совет Союзĕн туслăх обществин вырăнти уйрăмĕсен ответлă работникĕсем сăмах тухса каланă.

«Гунжэньжибао» хаçат паян Китайри железнодорожниксем Китайпа Совет Союзĕ договор тунăранпа икĕ çул тултарнине савăнăçлă уявлани çинчен пĕлтерет. Енер Чугун çул министерствинче савăнăçлă лару пулнă. Унта чугун çул транспортĕнче ĕçлекенсем 2 пин çын ытла пухăннă. Ларура чугун çулсен министрĕ Тэн Дай-юань доклад тунă. Вăл Китай Совет Союзĕпе тунă договор тăрăх ССР Союзĕнчен пулăшу илнипе çĕршыври чугун çулсене кĕске вăхăт хушшинчех юсаса çитерни тата çĕнĕрен 700 километр тăршшĕ чугун çул туни çинчен каланă.

Китайпа Совет Союзĕ договор тунăранпа икĕ çул тултарнă ятпа железнодорожниксен савăнăçлă ларăвĕсем тата Харбин, Цзинань, Мукден, Тяньцзин, Хэньян тата ытти хуласенче те пулса иртнĕ.

Китайри пысăк центрсенче пур çĕрте те Китайпа Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе договор тунăранпа икĕ çул тултарнине палăртакан фотовыставкăсем организациленĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ февралĕн 15-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Корея халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле фронтăн уйрăм участокĕсенче тăшмана хирĕç оборонăра тăрса хăшпĕр вырăнсенче çапăçнă. Фронтра уйрăмах паллă улшăну пулман.

Паян тăшман авиацийĕ Нампхо, Вонсан хулисем çине тата хĕвеланăçĕпе хĕвелтухăçĕнчи çыраисем тăрăхĕнчи районсене бомбăсем пăрахма хăтланнă.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллерийĕ тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

Тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне пухакан Пĕтĕм тĕнчери Пуçару Комитечĕн хатĕрленӳ ĕçĕсене тăвакан комиссийĕ пĕлтерни

КОПЕНГАГЕН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Данири промышленниксемпе сутăçсен «Берсен» ятлă хаçачĕ паян Тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне пухакан Пĕтĕм тĕнчери Пуçару Комитечĕн хатĕрленӳ ĕçĕсене тăвакан комиссийĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă:

«1952 çулхи февралĕн 10—12-мĕшĕсенче Копенгагенра Тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне пухакан Пĕтĕм тĕнчери Пуçару Комитечĕн хатĕрленӳ ĕçĕсене тăвакан комиссийĕн ларăвĕ пулчĕ. Тĕнчери çĕршывсен экономика ыйтăвĕсемпе пулмалли канашлăвне 1952 çулхи апрелĕн 3-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче Мускавра ирттермелле.

Комисси тулли кăмăлпа çакна палăртрĕ: канашлу пухас ĕçе пуçарнипе нумай çĕршывсенчи суту-илӳпе промышленноçа ертсе пыракансем, профсоюзсем, наукăпа общество деятелĕсемпе организацисем хытă интересленме тытăннă.

Пĕтĕм тĕнчери Пуçару Комитетне 1951 çулхи октябрĕн 27—28-мĕшĕсенче, Копенгагенра тунă. Çак комитет Тĕнчери экономикăллă канашлăва хатĕрлес ĕçпе ответлă орган, ку ĕçе туса пыракан пĕртен-пĕр орган пулса тăрать.

Канашлăва правительствăсен органĕсем пухмаççĕ. Унта промышленниксем, сутăçсем, çĕрĕçĕпе пурăнакансем, экономистсем, инженерсем, профсоюзсемпе кооперацин деятелĕсем хутшăнаççĕ.

Хатĕрленӳ ĕçĕсене тăвакан комисси çакăн çинчен аса илтерет: 1951 çулхи октябрĕн 27—28-мĕшĕсенче Копенгагенра Пуçару Комитечĕн ларăвĕсем пулса иртнĕ. Пуçару Комитечĕ хăйĕн заявленийĕнче канашлу экономика ыйтăвĕсене сӳтсе явасси çинчен, унăн тĕллевĕ—çĕршывсен,—вĕсен экономика системисем кирек мĕнле пулсан та,—пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине аталантарма пулăшасси, çĕршывсем хушшинче суту-илӳпе экономика çыхăнăвĕсене сармалли майсене палăртасси тата çавсене туннипе çынсен пурнăçне лайăхлатма пулăшасси пулать. Канашлу кун йĕрки çапла:

«Тĕрлĕ çĕршывсемпе тĕрлĕ системăсен пĕр-пĕринпе мирлĕ килĕштерсе ĕçлесе пурăннипе, мĕнпур çĕршывсен экономикăллă çыхăнăвĕсене аталантарнипе çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатмалли майсене тĕпчесе пĕлесси».

Канашлу тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕринпе суту-илӳ тăвас ĕçре хальхи вăхăтра пулса тăнă лару-тăру çинчен сӳтсе явать, çав ĕçри йывăрлăхсене пĕтерме, тĕнчери çĕршывсен пĕр-пĕрин хушшинчи суту-илĕвне анлă сарма тата нумай çĕршывсен экономикинче юлашки вăхăтра пулса тăнă йывăрлăхсене сахаллатмалли çул-йĕрсемпе майсене палăртма пулăшать.

Канашлу тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕринпе йĕркеллĕ суту-илӳ тăвасси аталанни тата пĕр-пĕринпе ытларах суту-илӳ туни мĕнле майпа нациллĕ производствăна ӳстерме, пур çынсем те ĕç илмелле тăвассине пурнăçлама, пурнăçра кирлĕ апат-çимĕçпе таварсем, хваттер укçи тата ыттисем те хаклланса пынине чарса лартма пулăшас ыйтăва пăхса тухать.

Сăмахран, канашлу хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемпе хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем, экономика енĕпе вăйлă аталаннă çĕршывсемпе начар аталаннă çĕршывсем хушшинче суту-илӳ тăвас ĕçе сарасси çинчен тата канашлăва пухăннисем тăратакан кун йĕркипе килĕшӳллĕ ытти сĕнӳсене сӳтсе явать.

Малалла канашлура çĕршывсен уйрăм ушкăнĕсем ятарласа çырнă докладсем тăратма пултарассĕ тесе шутланă пулсан, çавăн пек йĕрке тума кирлĕ марри çинчен уйрăм çĕршывсен канашлăва хатĕрленес ĕçе туса тăракан нациллĕ комитечĕсем асăрхаттарса çырса янисене комисси шута илчĕ. Канашлу кун йĕркинче тăракан ыйтăва çĕршывсен ушкăнĕсен пĕр докладне тата темиçе докладне пăхса тухас йĕркепе мар, канашлăва пухăннисем пурте хăйсем кăмăл тунă тăрăх тухса калас йĕркепе сӳтсе явни усăллăрах пулĕ.

Канашлăва пухăннисен пысăкрах йышне тухса калама тата хăйсене интереслентерекен ыйтусене конкретнăрах сӳтсе явма май парас шутпа, пĕрлехи ларусемсĕр пуçне, уйрăм ыйтусене пăхса тухма секцисем организацилемелле. Сăмахран, тĕнчери çĕршывсен пĕр-пĕрин хушшинчи суту-илĕвне аталантарас, экономика енĕпе вăйсăр çĕршывсемпе çыхăнса суту-илӳ тăвас ĕçе аталантарма пулăшас ыйтусемпе ĕçлекен, социальнăй пурнăç ыйтăвĕсене тата ытти ыйтусене татса парас шутпа пĕтĕм тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕрин хушшинче килĕштерсе ĕçлесси çинчен сӳтсе явакан секцисем организацилеме палăртнă.

Тĕрлĕ çĕршывсен суту-илӳпе промышленноçа ертсе пыракансен представителĕсем, сутăçсемпе промышленниксен представителĕсем пĕр-пĕринпе ĕçлĕ çыхăнусем тытмалла тăвассинче пулăшма кирлине шута илнĕ.

Канашлу харпăр хăйĕн шухăшĕсене тĕплĕн тата ирĕклĕн пĕлтерме май парать, канашлăва хутшăннисене пĕр-пĕр ĕçпе çыхăнтаракан нимĕнле постановлени те йышăнмасть, сĕнӳсем кăна йышăнать.

Хатĕрленӳ ĕçĕсене тăвакан комисси канашлупа интересленекенсене пурне те унта хутшăнма чĕнет. Канашлăва промышленниксен, сутăçсен, çĕрĕçĕпе пурăнакансен, суту-илӳ палатисен, промышленноçри пĕрлешӳсен, финансистсен тата кооперацин пĕрлешĕвĕсен представителĕсене чĕнетпĕр.

Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн экономика енĕпе ĕçлекен органĕсене те канашлăва хутшăнма ыйтса чĕнӳ яратпăр.

Канашлăва кирек мĕнле çулпа пыракан профсоюзсен представителĕсем те, çавăн пекех тата ученăйсем, экономистсем, наукăпа общество деятелĕсем хутшăнаççĕ. Çапла вара, çĕршывсем пĕр-пĕрин хушшинче суту-илӳ тăвассине тата ытти енĕпе экономикăллă çыхăнусем тытассине аталантарас ĕçре пулăшма шутлакан пур çынсем валли те,—вĕсен политикăллă шухăшĕсем мĕнле пулнине пăхмасăр,—канашлура вырăн пулать.

Комисси Канашлăва хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет комитечĕ хăйĕн заявленийĕнче мĕн калани çинчен аса илтерет: канашлăва хутшăнакансене ССР Союзĕн территорийĕнче пурăннă чухне кирлĕ пулăшу параççĕ, хăнасене кĕтсе илнĕ пекех йышăнаççĕ. Вĕсем хăйсем кăмăл тунă тăрăх Совет Союзĕнчи суту-илӳ, промышленность тата кооперации организацийĕсен представителĕсемпе тĕл пулса калаçма пултараççĕ.

Тĕнчери çĕршывсен экономика ыйтăвĕсемпе Мускавра пулмалли канашлăвне хутшăнма шутлакан пур çынсем те çавăн çинчен хатĕрленӳ ĕçĕсене хăйсен çĕршывĕсенче туса тăракан комитетсене пĕлтерме тата канашлăва хатĕрленес ĕçсене туса тăракан комиссие пĕлтерме пултараççĕ. Хатĕрленӳ ĕçĕсене тăвакан комиссин адресĕсем çапла: «Больё» отелĕ (Копенгаген), Спрингфорби (Дани).

Тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне пухма хатĕрленес ĕçсене тăвакан комисси».

Навигацие хатĕрленеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Пристань коллективĕ иртнĕ навигаци планне пур енĕпе те ăнăçлă тултарчĕ. Халĕ вăл кăçалхи навигацие тимлĕ хатĕрленет. Суднăсене пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ. Топливо хатĕрлесси те ăнăçлă пырать. Груз турттарма договорсем хулари организацисемпе тунă.

Пристаньре ĕçлекенсен квалификацине ӳстерме курс организациленĕ. Вăл курсра пристань работникĕсемсĕр пуçне суднăсем тытакан организацисен работникĕсем те вĕренеççĕ.

Çулĕ çуртсем тума

Иртнĕ çулта Йĕпреçри вăрманпромхоз Мускаври университетпа çулĕ çуртсене тума юман ярса тăма пуçларĕ. Кăçал та юман ярса парассине уйăхран уйăха ӳстерсе пыраççĕ. Январьте планран ирттерсе юман ярса пачĕç. Февральте 44 вагон ярса памалла пулсан, уйăхăн малтанхи пилĕк кунĕнчех çуррине яхăн тиесе ăсатрĕç. (Хамăр информаци).

Вкладчиксен хисепĕ ӳссе пырать

Республикăри ĕççыннисем государство заемĕсем тăрăх выляв укçи илесси çултан-çул ӳссе пырать. 1950 çулта республикăри перекет кассисем 11 миллион та 430 пин тенкĕ выляв укçи тӳленĕ. Иртнĕ çулта вара 14 миллион та 735 пин тенкĕ тӳленĕ. Çак хисепе пысăк выляв семшĕн тӳленĕ укçа шучĕ кĕмест.

Перекет кассисенчи вкладчиксен йышĕ те нумайланса пырать. Юлашки виçĕ çул хушшинче вĕсен хисепĕ икĕ хута яхăн ӳснĕ.

Вкладчиксен йышне ӳстерес тĕлĕшпе Улатăр хулинчи перекет касси малта пырать. Вăл пĕлтĕрхи плана 200 процент ытла тултарнă. Çавăн пекех Улатăр, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Етĕрне, Сĕнтĕр районĕсенчи перекет кассисем те хăйсен планĕсене ирттерсе тултарнă.

Культурăллă пурнăç хроники

Колхозниксем валли передачăсем. Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозра радиоузел урлă тĕрлĕ передачăсем парассине аван йĕркеленĕ. Çак кунсенче колхоз председателĕ А. Моисеев юлташ радио тăрăх ялхуçалăх артелĕ суракине мĕнле хатĕрленни çинчен каласа пачĕ, колхозниксене суракине лайăх хатĕрленме, ăна большевикла ирттерме чĕнсе каларĕ.

100 лекци. Политикăллă тата наукăллă пĕлӳсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн Вăрмар районĕнчи уйрăмĕ 20 лектора ытла пĕрлештерсе тăрать. Вĕсем иртнĕ çулта районти колхозсенче, предприятисенче 100 лекци вуласа панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЗАЕМ ОБЛИГАЦИЙĔСЕМ ТЫТАКАНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

«Чăваш Коммуни» хаçатăн 1952 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче тухнă номерĕнче 1952 çулта государство заемĕсем тăрăх вылявсем ирттермелли план пичетленсе тухнăччĕ. Асăннă планра 1952 çулхи январь уйăхĕнче пулнă вылявсене кăтартман. СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли виççĕмĕш государственнăй заемăн 7-мĕш выляв январĕн 20-мĕшĕнче, Государствăн 3 процентлă выляса илмелли шалти заемĕн 25-мĕш вылявĕ январĕн 30-мĕшĕнче пулса иртнĕ.

Чăваш АССР Перекет кассисен управленийĕ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРЕНЧЕ

Паян, февралĕн 17-мĕшĕнче, кăнтăрла вырăсла спектакль
«ЗА ЧЕМ ПОЙДЕШЬ, ТО И НАЙДЕШЬ»
каçхине чăвашла спектакль
„Пурнăçа юратса“
(Юлиус Фучик)

Тунтикун, февралĕн 18-мĕшĕнче, вырăсла спектакль
«ЗА ЧЕМ ПОЙДЕШЬ, ТО И НАЙДЕШЬ»

Ытларикун, февралĕн 19-мĕшĕнче, чăвашла спектакль
„Ревизор“

Спектакльсем кăнтăрла 12 сехетре, каçхине 20 сехетре пуçланаççĕ.

„Родина“ кинотеатрта

Паян, февралĕн 17-мĕшĕнче, Венгрире ӳкернĕ
„Колония под землей“
ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм.

Ыран, февралĕн 18-мĕшĕнче,
„На берегах Верхней Волги“
тата
„Театр зверей“
ятлă научно-популярнăй фильмсем.

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

Англири профсоюзсен протесчĕ

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕшĕ (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, пĕтĕм çĕршыври горняксен профсоюзĕн исполкомĕ февралĕн 14-мĕшĕнче правительство социальнăй ĕçсем валли памалли укçа хисепне чакарас пирки решени йышăннине хирĕç протестленĕ. Ку профсоюзра 700 пин çынна яхăн членра тăрать. Исполком протестлесе çырнă резолюцие парламентăн горняксен районĕсенчен суйланнă пур членĕсене те ярса пама, вĕсенчен правительствăн çавăн пек решенине хирĕç пĕр тăктаса тăмасăр общинăсен палатинче протестлеме ыйтма йышăннă.

Правительство решенине хирĕç протестлеме профсоюзăн вырăнти нумай организацийĕсем хутшăннă. Горняксен профсоюзĕн Уорнклифф хулинчи (Йоркшир) уйрăмĕ (унта 1.500 член) хăй йышăннă резолюцире правительство умне хĕçпăшалланма тухакан расходсене нумай чакарма тата пурăнмалли çуртсем лартма, халăха вĕрентес ĕç валли тата социальнăй ĕçсене пурнăçлама ытларах укçа уйăрса пама требовани лартнă.

Машиностроительсен пĕрлештернĕ профсоюзĕн Ротерем хулинчи (Йоркшир) уйрăмĕ организациленнĕ рабочисене правительство рабочи класăн пурнăçне начарлатма тăпăннине хирĕç пĕтĕм вăйпа кĕрешме чĕннĕ. Лидс хулинчи çĕвĕçсен профсоюзĕн уйрăмĕ те, конторщиксемпе администраци çумĕнче ĕçлекенсен профсоюзĕн уйрăмĕ те, машиностроительсен пĕрлештернĕ профсоюзĕн Брадфортпа Гулль хулисенчи уйрăмĕсем те çавăн пек резолюцисем йышăннă.

Тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвĕ пухăнас умĕн

ХЕЛЬСИНКИ, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Вапаа сана» хаçат çапла пĕлтерет: хаçат илнĕ сведенисем тăрăх, тĕнчери çĕршывсен экономика ыйтăвĕсемпе Мускавра пулмалли канашлăвне Финляндирен 8—10 çынран тăракан делегаци яма йышăннă. Делегацире суту-илӳ, промышленность тата ялхуçалăх представителĕсем пулмалла.

Финляндин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин суту-илӳ политики уйрăмĕн начальникĕ Лехтинен «Вапаа сана» хаçат корреспондентне: Финлянди, çурçĕр енчи ытти çĕршывсем пекех, çав канашлăва хутшăнассипе интересленет, тенĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01242 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.